24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ДЕКАБРЬ
25
КĔҪНЕРНИКУН
304 (6019) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тăнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАСҪР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

## Парти организацийĕсен хисеплĕ ĕçĕ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Октябрь уявĕ кунĕсенче чĕнсе калани сине ответлесе, колхоз хресченĕсем пирĕн çарпа флота валли, тăван çĕршыв валли тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата чĕртавар ытларах та ытларах парса тăма тытăнчĕç. Пирĕн колхозниксем хăйсем личнăй хуçалăхĕсенче вылăхсен йышне нумайлатма тăрăшмалла. Çак ĕçре колхоз хресченĕсене партин пуçламăш организацийĕсен, ВКП(б) райкомĕсен, совет органĕсен ертсе пырас пулать.

ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисем нумайĕшĕ вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кулленех ĕçлеççĕ. Вăл мĕнле пулса пыни çинчен, ĕçе мĕнле лайăхлатасси çинчен парти райкомĕсен заседанийĕсенче, парти пухăвĕсенче, ялти работниксен тĕрлĕ хăрушлăвĕсенче сӳтсе-явăççĕ, малашне тумалли ĕçсене палăртăççĕ. Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацин секретарĕ, вăлах колхоз председателĕ Е. Карпов юлташ общестăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пуçламăш парторганизацин тĕп вырăнта тăракан ĕçĕсенчен пĕри тесе шутлать, унта фермăсен ĕçĕсем çинчен парти пухăвĕсенче сӳтсе-явăççĕ, фермăсен ĕçне кулленех тĕрĕслесе тăраççĕ. Общестăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ВКП(б) членĕн кандидачĕ И. Коновалов питех те тăрăшса ĕçлет. Çавна пула ку колхоз общестăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултерсе тултарнă. 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне пулнипе танлаштарсан, çак колхозра майракалă шултра вылăхсем 30 пуçран 42 пуçа çитнĕ, урăхла каласан, 140 процента çитнĕ, çавăн пекех сыснасем ĕрчетес плана 124 процент, сурăхсем тĕлĕшпе 200 процент тултарнă. Сĕт суса илес плана октябрь уйăхĕнчех тултарнă.

Пуçламăш парторганизаци тăрăшнипе колхозра вылăх пăхакансен кадрне вĕрентсе ӳстернĕ. Çапла вара, вылăх пăхакансем хăйсен ĕçне юратса туса пыраççĕ. Сурăхсем пăхакан Волкова юлташ 100 сурăхран 200 путек ӳстернĕ, калани сурăхран вăтам шутпа 2,8 килограмм çăм илнĕ. Пăрусем пăхакан Елизавета Бабаева хăйĕн аллине панă 16 пăрăва тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстернĕ. Вăл пăхакан пăрусем малтанхи ултă уйăх хушшинче вăтам шутпа талăкра 533-шер грамм ӳснĕ. Вылăхсене лайăх пăхса ӳстернĕшĕн Волковăпа Бабаева юлташсем ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркепе сĕт тата аш-какай илме тивĕçлĕ пулнă.

Парти кандидачĕсен Туçири группи (Çĕрпӳ р.) колхозниксем хăйсен килĕсенче вылăх-чĕрлĕх ӳстерсе самăртас ĕçе организацилерĕ. Туçири «Цивильстрой» колхозăн членĕсем оборона фондне пама 31 сысна, 60 сурăх, 20 хур тата кăвакал, 30 чăх ӳстерсе самăртма, кунсăр пуçне 20 килограмм çу тата 100 штука çăмарта пухса пама пулчĕç. Туçи колхозникĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксене, колхозницăсене тата ĕççыннисене хăйсен примерĕ тăрăх харпăрхăйĕн хуçалăхĕсенче вылăх-чĕрлĕх самăртса çĕршыв оборонин фондне пама чĕнчĕç. Пирĕн республикăри чылай колхозсенче çак чĕнĕве хапăл туса йышăнчĕç. Çапла вара колхоз хресченĕсен тепĕр çĕнĕ пуçарăвĕ анлăн сарăлса пырать.

Çав вăхăтрах вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр колхозсем вылăх витисене хĕлленех начар хатĕрлерĕç. Çавăн пирки халь çеç пăрамланă путексемпе çурăсем пăнса антраннисем пулкалаççĕ, уйрăм колхозсенче вылăхсене начар пăхаççĕ. Элĕк районĕнчи Тури Иолăшри колхозра фермăсенчи вылăхсене талăкра пĕр хут кăна шăвараççĕ. Паллах ĕнтĕ, вылăхсем сине çавăн пек пăхни пулмалла мар. Кашни скотникăн, дояркăн, конюхăн хăйне панса панă вылăхсене лайăх пăхса усрама тăрăшас пулать.

Партин хăшпĕр райкомĕсемпе пуçлă Элĕк тата Калинино районĕсенче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе çитĕлĕксĕр ĕçленĕ пирки ноябрь уйăхĕнче Шупашкар, Вăрнар, Шăхасан, Вăрмар, Тăвай, Элĕк тата Калинино районĕсенче вылăхсен йышĕ чакнă. Уйрăм колхозсенче вылăхсене сапаласа пĕтерес çул çине тăнă. Элĕк районĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн ферминче 80 пуç сысна пулнă пулсан, халĕ унта 61 пуç кăна. 18 сысна пуснă, 20 çурă колхоз членĕсене сутнă, 14 çурă пасара илсе кайса сутнă. Çапах та партирайкомĕ те, райсовет исполкомĕ те ун çинчен сӳтсе явса, районри пуçламăш парторганизацисемпе колхоз правленисене ун çинчен асăрхаттарман.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ертсе пыракки парти райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Вĕсен çак ĕçе хăйсен аллинчен яма юрамасть, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессине кашни кунах, кашни сехетрех ĕçлес пулать.

Вылăхсен халăхи йышне сыхласа усрама тăрăшнипе пĕрлех вылăхсен йышне хутшăнтарас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Уйрăмах ама вылăхсене пурне те лайăх пăхса усрамалла. Вĕсем тĕрĕс-тĕкĕл пураннинчен, вĕсен йышĕ ӳснинчен вылăхсен йышĕ хутшăнасси килет. Пĕтĕ кĕсресене лайăх пăхса усрасси çине хытă çавăрăнса пăхас пулать. Тиха тăвас вăхăт сывхарса пынă май кĕсресене йывăр ĕçрен хăтармалла. Вĕсене апат çемçетсе çитерес пулать. Çавăнпа пĕрлех лашасемпе пурнипе те ĕçре тĕрĕс усă курма тăрăшмалла.

Фермăсенчи вылăхсен йышне планпа кăтартнă хисепе çитермелле. Çакна тума колхозниксенчен тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарнă урăх колхозсенчен, вĕсемпе калаçса татăлса, вылăхсем сутăн илес пулать.

Вылăх пăхакансем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе тăтăшах туса пымалла. Вĕсене отечественнăй вăрçă çинчен тата совет халăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса парас пулать, çавăнпа пĕрлех зоотехникăпа ветеринари ĕçне вĕрентмелле. Вĕсен революциллĕ сыхлăхне ӳстермелле, вĕсем вылăхсене сыхласа усрама, витесене лайăх хураллама вĕренсе çитчĕр, хăнăхса пыччăр.

Вылăх пăхас ĕçри ăста колхозниксем чылайăшĕ Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç. Çавна май вылăх пăхакан çĕнĕ кадрсене вĕрентсе ӳстересси çине парти организацийĕсен ытларах çавăрăнса пăхас пулать.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре большевикла йĕркелĕх туса, вылăхсене ĕрчетсе тата вĕсен продуктивноçне хăпартса пырса, эпир çарпа флота валли, тăван çĕршыв валли ытларах та ытларах апат-çимĕç парас задачăна тыслăн пурнăçа кĕртетпĕр.

## Йĕлтĕрлĕ кросс ирттерме оргкомитет тунă

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа профсоюзпа комсомол организацийĕсен йĕлтĕрлĕ кросне ирттересси çинчен решени йышăннă. Кроса хатĕрленсе ирттерме 9 сынтан республикăри оргкомитет тунă. Унăн председателĕ **П. М. Михайлов** (ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ), заместителĕ **А. П. Рябов** (ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ), членĕсем: **К. Е. Евлампьев** (ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ), **Л. В. Федин**, (Облвоенкоматăн всевобуч отделĕн начальникĕ), **В. Н. Никишева** (физкультурăпа спортăн республикăри комитечĕн председателĕ), **С. А. Симонов** (учительсен союзĕн обком председателĕ), **Л. Т. Грачева** (Медсантруд союзĕн обком председателĕ), **Я. Б. Краверский** («Спартак» ДСО председателĕ), **М. М. Гущина** (йĕлтĕр спорчĕн мастерĕ).

Обком бюровĕ ВКП(б) райкомĕсене, ВКП(б) Шупашкар хула комитетне кроса хатĕрленсе ирттерес ĕçе ертсе пыма, 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен парти, профсоюз, комсомол, физкультура организацийĕсен представителĕсенчен районри оргкомитетсене тума хушнă. ВЛКСМ обкомне, физкультурăпа спортăн республикăри комитетне тата профсоюзсен обкомĕсене кроса ирттерес ĕçе халех хатĕрленме тытăнма, судьясен коллегийĕсене тума, йĕлтĕрпе çурес тĕлĕшпе ĕççыннисен массăллă ăмăртунĕ ирттерме, йĕлтĕрпе çурекенсем хушшинче пĕтĕм районĕпе е хулипе мала тухассишĕн ăмăрту туса ирттерме, сывлăха сыхлас ĕçĕн халăх комиссарне Лихачев юлташа кроса хутшăнас тенисене пурне те медицина тĕлĕшпе пăхса тухма хушнă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ профсоюз, комсомол, физкультура организацийĕсем умне çакăн пек задача лартнă — кроса мĕнпур профсоюз тата комсомолăн пуçламăш организацийĕсене явăçтармалла, çавăн пекех ĕççыннисене явăçтарса подразделенисем — отделенисем, взводсем, ротăсем тăрăх уйăрса организацилемелле.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Декабрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Хĕвеланăç, Калинин тата Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕсенчи чылай участоксенче пирĕн войскăсем, противника хирĕç çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан чылай пункт-сене, вĕсен шутĕнче чугунçулăн пысăк узелне Горбачева тата Черепетьпе Одоево хулисене йышăнса илнĕ.

* * *

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕнчи çапăçакан партизансен отрячĕсем фашистла захватчиксен тылне çаплах аркатса пыраççĕ. П. юлташăн отрячĕ чугунçул линийĕсене икĕ вырăнта аркатса тăкнă, шоссе çулĕсем çинчи 4 кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ тата 13 тĕрлĕ пунктра телефон сыхăнăвĕсене пăснă. Отрядри партизансем нимĕçсен 3 офицерне тата 50 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшманăн 3 танкне, 5 грузовой тата 8 çăмăл автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нумаях пулмасть П. юлташăн партизанла отрячĕ çине фашистсен карательнăй отрячĕ пырса тапăннă. Сехет çурă пынă çапăçура партизансем 37 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ. В. юлташ командирлă пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, икĕ уйăх хушши çаптăçса, тăшман пехоти ларса пыракан тата тĕрлĕрен грузсем тиенĕ 50 грузовой автомашинăна тата пĕр бронемашинăна пĕтерсе тăкнă, чугунçулсемпе кĕперсем çинче 30 взрыв ытла тунă, çакăн пек туса нимĕçсен темиçе çар эшелонне ӳпĕнтерсе аркатнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизин 510-мĕш пехотнăй полкĕнчи Вальтер Герман ефрейторăн дневникне тупнă. Дневникри хăшпĕр уйрăм вырăнсене илсе кăтартатпăр:

**«Ноябрĕн 28-мĕш.** Эпир яла пырса кĕтĕмĕр. Кашни çуртшăн çапăçу пырать. Вырăссем каялла чакасшăн мар хытă тăраççĕ. Пирĕн вилнисемпе аманнисем пур. Малалла ниепле те кайма пултараймастпăр. Кĕтмен çĕртен вырăс артиллерийĕ пеме пуçларĕ. Чăтма çук хăрушă япала!

**Ноябрĕн 29-мĕш.** Каллех çапăçусем. Вырăссем пирĕн çине вăйлăн персе тăраççĕ. Вĕсен танкĕсем пуçăрланнăçемĕн пуçăрланса пыраççĕ. Вилнисемпе аманнисем каллех нумай.

**Декабрĕн 5-мĕш.** Пĕрмаях шăнатпăр. Наступление каятпăр. Вырăссем пирĕн çине вĕçĕмсĕр вутхĕм тăкаççĕ. Мĕскĕн унтер-офицерпа фельдфебель Шмейдер манпа юнашарах вилсе выртрĕç. Юлашкинчен аранах хӳтлĕх тупрăм. Пеме пултараймастăп. Алăсем шăнса ларчĕç... Виçĕ хутчен наступление кайрăмăр, анчах ăнăçăр пулчĕ. Юлашкинчен акă ăшă пурте кĕме пултартăм. Атте хыватăп. Ура пӳрнисене иккĕшинне те тăм илсе янă.

**Декабрĕн 7-мĕш.** Пире лавсем çине лартрĕç. Эпĕ ура çинче тăма та, утма та пултараймастăп. Урасем тӳсме çук ыратаççĕ. 6-мĕш ротăра тăм илсе янисем 26 çын. Стройра 30 çын çеç юлчĕ.

**Декабрĕн 10-мĕш.** Тăм илсе янисене 500 çынна яхăн 345 лавпа 25 километр таран тыла ăсатрĕç. Пирĕн дивизин ирĕксĕрех каялла чакмалла пулчĕ... Эпир пурне те, мĕн кирлине пĕтĕмпех патăмăр... Халĕ пĕтĕмпех пĕтрĕмĕр. Елĕк Наполеона хăваланă пекех, пире те каялла хăвалаççĕ. Çакна хамăр çĕршывра пĕлмеççĕ-ха».

* * *

1941 çулти декабрĕн 20-мĕш тĕлне Мускав ĕççыннисем СССР оборонин фондне 110 миллион та 402 пин тенкĕ укçан панă, кунсăр пуçне москвичсем оборона фондне ытлăн, платина тата кĕмĕл нумай панă.

### Декабрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинчи çапăçусенче противникăнне 12 танк, 10 орудие, 300 автомашина, пысăк бензинхранилище тата снарядсемпе минăсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем, нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕссе кăларса, 14 пулемет тытса илнĕ тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Говоров юлташăн çаçĕ, Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекенскер, икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 30 автомашинине, çар пурлăхĕсем тиенĕ 70 лавне, пĕр орудине, икĕ миномете пĕтерсе тăкнă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.650 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Иванов лейтенантăн подразделенийĕ, тĕттĕм пулнипе усă курса, противникăн флангне вăрттăн пырса кĕнĕ те пулеметсемпе минометсенчен пеме пуçланă. Нимĕçсем тарма тытăннă, 7 оруди, икĕ пулемет тата ытти хĕçпăшалсем пăрахса хăварнă.

* * *

Фашистсен тыткăна лекнĕ çынсем валли тунă лагерĕнчен тарса тухнă совет гражданинĕ Алексей Никитович Панов çапла каласа парать: «Киев хулинчи Керосинная урамра тунă лагерьте эпĕ 1941 çулти сентябрĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 10-мĕшчен пурăнтăм. Çак вăхăт хушшинче эпĕ, хупса лартнă ытти çынсем пекех, 20 грамм тăварланă комса тата шăршлă çăнăхпа пăтратнă 6 котелок шыв илтĕм. Эпир пушар пичкисенчен шыв ĕçеттĕмĕрччĕ, вăл пичкере пăсăлнă шыв пулнă. Нимĕçсем пире 14—16-шар сехет ĕçлеттеретчĕç, туясемпе хĕнетчĕç. Вăйран тухнă пирки ĕçлеймен çынсене фашистла ирсĕрсем пĕр шеллемесĕр пере-пере пăрахатчĕç. Воронъки ялĕнче нимĕçсем тыткăна лекнĕ тата аманнă красноармеецсемпе советăн медицина сестрисене 40 çынна больница пулнă çурта вырнаçтарчĕç. Медсестрасене гитлеровецсем ирĕксĕр лесе машкăлларĕç те персе вĕлерчĕç, больница патĕнче часовойсем тăратрĕç те унта никама та ямарĕç. Тăватă кун иртсен, чирлисенчен пĕр пайĕ вилчĕ. Чĕрĕ юлнисене ирсĕр бандитсем юханшывра путарчĕç».

Тыткăна лекнĕ çынсем валли Дерницкра (Киев патĕнче) тунă лагерьте охрана красноармеецсене патаксемпе хĕнет. Тыткăнри çынсене вир яшкисĕр пуçне нимĕн те çитермеççĕ, вир яшкине те пулин икĕ-виçĕ кунра пĕр хут кăна параççĕ.

* * *

Югославири чылай районсенче партизансемпе фашистла оккупантсем хушшинче каллех вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Декабрĕн 18-мĕшĕнче партизансен пысăк отрячĕ Ужице хули патĕнче Италин пехотнăй чăсне пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче фашистсем 100 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Совет çĕршывĕн хулисемпе ялĕсенчи ĕççыннисем çĕнĕ çул ячĕпе мухтавлă Хĕрлĕ Çаран боецĕсем валли фронта çĕршер пин парнесем яраççĕ. Ереванри почтамт икĕ кун хушшинче 3.500 посылка йышăннă. Камарлинскри районри колхозниксем пĕр пин ытла посылка янă. Саратовран пĕр кун хушшинче кăна фронта çĕнĕ çул ячĕпе пине яхăн посылка янă. Красноярскри предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем çĕнĕ çул ячĕпе 100 пин тенкĕлĕх ытла парнесем пухнă. Туркмен ССР-нчи Чарджоуски районри Халтурин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем Хĕрлĕ Çаран Н-ски часĕнчи боецсем патне çĕнĕ çул ячĕпе парнесем яраççĕ, çав часре вĕсен тăванĕ Совет Союз Геройĕ Курбан-Дурды пурăнать. Колхозниксем боецсем патне 20 така, пĕр ĕне, чăх-чĕпсем, 1000 çăмарта, 1000 килограмм пыл, 50 килограмм çу яраççĕ. Халтурин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозниксен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ Чарджоуски облаçри ĕççыннисем патне çĕнĕ çул ячĕпе парнесем яма эшелон организацилемешкĕн чĕнсе çыру çырнă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Карели фрончĕ).

«Пирĕн тăван çĕршыв территорийĕ çине, ăна оккупацилекенсем пулса сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕçсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкар». (Сталин). Çакă Сталинла боевой лозунгпа паттăрла çĕнĕ ĕçсем тăвать Совет Союзĕн Геройĕ Кисляков. Важная высотăшăн пынă çапăçусем вăхăтĕнче вăл хăйĕн станковăй пулеметĕпе противник персе тăракан позицийĕсене пĕтĕм шуса çитнĕ те, кашни черет хыççăн çĕнĕ вырăна куçса, нимĕçсен пĕр взводне пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ.

**УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ:** Совет Союзĕн Геройĕ старший сержант В. П. Кисляков.

**ТАСС фотохроники.**

## Çĕнĕ çул ячĕпе парне яраççĕ

КАЛИНИНО. Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, аслă çулпуç Сталин юлташăн чĕнĕвне пурнăçа кĕртсе пырас майпа, çĕнĕ çул ячĕпе паттăр та мухтавлă Хĕрлĕ Çара 20 центнер тĕпштырă, 140 килограмм сысна какайĕ, ăшă япаласем тума 50 килограмм çăм пама пулчĕç. Хĕрлĕ Çара малалла та пулăшса пырас тĕлĕшпе 10 пуç сысна, 2 пуç майракалă шултра вылăх самăртма хупрĕç. Хĕрлĕ Çар валли 10 путек ӳстерĕççĕ, 10 гектар сĕр лаптăкĕ çине тырă акса хăварма пулчĕç. Кунсăр пуçне, колхозниксемпе колхозницăсен килĕсенче Хĕрлĕ Çар валли ятарласа çамрăк вылăхсем ӳстерме килĕштрĕç. Акă, П. Максимов—пĕр сысна, В. Максимов—пĕр сурăх, М. Трофимов—икĕ хур, К. Афанасьев—пĕр така тата ытти колхозниксем те Хĕрлĕ Çар валли хăйсен килĕсенче вылăх-чĕрлĕхсемпе кайăк-кĕшĕксем çитĕнтерме тытăнчĕç.

Т. Петрова—400 грамм çăм, Д. Гусева—200 грамм çăм тата 25 çăмарта, К. Иванова—30 çăмарта, П. Кириллова—30 çăмарта, А. Васильева—25 çăмарта, В. Яковлева—400 грамм çăм, А. Степанов—500 грамм çăм, А. Ершова—пĕр мăшăр алшши тата ытти чылай колхозниксемпе колхозницăсем, хаклă продуктсем хатĕрлесе, Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне çĕнĕ çул ячĕпе парне яраççĕ.

**В. ШАХАЛОВ.**

## „Комсомол Чувашии“ бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

ШАХАСАН. Районри ĕççыннисем хушшинче «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухасси саралсах пырать. Паянхи куна районри ĕççыннисем бронепоезд тунă çĕре укçан 31.091 тенкĕ, заем облигацийĕсене 2820 тенкĕлĕх хывнă.

Ку ĕçре уйрăмăнах Ямашри, Анат Вăрман ялĕнчи, Авăспӳрт Кипечри комсомолецсемпе çамрăксем аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ямашри комсомолецсемпе çамрăксем бронепоезд тума 640 тенкĕ укçан тата 1.230 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, Анат Вăрман ялĕнчи «Сосновка» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем — 660 тенкĕ, Авăспӳрт Кипеч вăтам шкулĕнчи комсомолецсемпе вĕренекенсем—600 тенкĕ панă.

**В. ЯКОВЛЕВ.**

* * *

КУКЕҪ. Районри ĕççыннисем хушшинче «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас ĕç вăйланса пырать. Ку вăхăтчен районĕпе 14.000 тенкĕ пухса госбанк отделенине хывнă.

Бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе уйрăмăнах комсомолецсем активланăн хутшăнаççĕ. Комсомолăн Кӳкеç вăтам шкулĕнчи пуçламăш организаци 152 тенкĕ пухса панă.

Лапсарти туллимар вăтам шкул директорĕ А. Нестеров, партин Иккассинчи пуçламăш организацин секретарĕ Албутов, ВЛКСМ райкомĕнче ĕçлекен Н. Антонов юлташсем 100-шер тенкĕ панă.

Бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе колхозниксем те анлăн хутшăнаççĕ. Хыркасси ялсоветĕнчи «Чăшлавар» колхоз членĕсем 240 тенкĕ, Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз членĕсем 73 тенкĕ пухса панă.

Районра бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе хутшăнман комсомол организацийĕсем те пур-ха.

Машинăпа-тракторнăй станци çумĕнчи комсомол организацийĕ (секретарĕ Петухова), Кӳкеç ялповĕ çумĕнчи пуçламăш организаци (секретарĕ Жидкова) бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ыйтăва комсомолецсем хушшинче те сӳтсе-явман.

**И. ВАСИЛЬЕВ.**

## Танксен соединенине тума

ОКТЯБРЬСКОЕ. Удмурт республикинчи «Универсал» промсоюз коллективĕ танксен соединенине тумашкăн укçа-тенкĕ пухма чĕнсе калаянине сӳтсе-явнă хыççăн Караньялĕнчи «Труд» промартельре ĕçлекенсем декабрĕн 7-мĕшĕнче воскресник туса ирттернĕ. Воскресникре ĕçлесе илнĕ 680 тенкĕ укçана промкооперати ячĕпе тăракан танксен соединенине тунă çĕре панă.

«Труд» промартель танксен соединенине тунă çĕре пурĕ 3.680 тенкĕ панă.

**Ф. НИКОЛАЕВ.**

*Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче*

# СЕВАСТОПОЛЕ ХŬТĔЛЕКЕНСЕМ ТĂШМАНА ХИРĔÇ ПАТТĂРРĂН КĔРЕШЕÇÇĔ

ФРОНТĂН КРЫМ УЧАСТОКĔ. Декабрĕн 21-мĕш. **(ТАСС специорĕ).** Фронтăн Крым участокĕнче нимĕç оккупантчĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ. А. ялĕпе высота патĕнче уйрăмăнах хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ, ку вырăнта тăшман пирĕн оборонăна татса кĕрешĕн. Пирĕн чаçсем тăшманăн хаяр атакисене пурне те сире-сире пăрахрĕç, тăшмана пысăк çухатусем кŭчĕç. Пирĕн оборона çине наступленипе тăвас тесе, тăшман пирĕн пехотăна хирĕç танксем кĕртсе ячĕ. Анчах та çавă та совет боецĕсене хăратаймарĕ. Тăшманăн танкĕсене, пĕтере-пĕтере тăкма пирĕн боецсем халĕ ĕнтĕ вĕренсе çитрĕç. Тăшманăн 2 танкне пĕтерсе тăкса тата пĕр орудине тытса илсе, пырăн боецсем тăшмана каяллах, хăйĕн малтан йышăнса тăнă позицийĕсем çине, тăвасласа ячĕç. Çапăçу хирне нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 50 вилли ытла вырттса юлчĕ.

Пирĕн артиллерипе авиаци тăшмана пысăк çухатусем кŭрет. 4 кун хушшинче кăна, декабрĕн 17-мĕшпе 20-мĕшĕсем хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, авиачăсенчен пĕринчи летчиксем тăшманăн 7 танкне, 16 танкеткине, 3 броневикне, 15 бронемашинине, 10 пулеметне, 60 автоматне, 14 зенитнăй пулеметне, 5 автобусне, 36 лавне пĕтерсе тăкнă, тăшман пехотин 9 ротине çити вĕлерсе пĕтернĕ. Çав кунсенчех нимĕçсен 65 самолетне персе антарнă.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче Севастополь тĕлĕнче сывлăшпа вăйлă çапăçу пуçса иртрĕ. Хура тинĕс фронтĕнчи мухтавлă летчиксем тăшманăн 5 самолетне персе антарчĕç. Сиков летчик фашистсен икĕ бомбардировщикне—«Юнкерс—88» тата «Мессершмитт—109» йышши самолечĕсене пĕтерсе тăкрĕ. Капитан Денисов тата Шеляпина Степанов летчиксем кашниех тăшманăнне пĕрер бомбардировщик персе антарчĕç.

**М. ТУРОВСКИЙ**

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç енĕ). **УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ:** Н-ски чăваш губица батарейи огневой позицире. А. ГРИБОВСКИЙ фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

# Ирĕке кăларнă районсем хушшинче çыхăну йĕркеленсе пырать

ТУЛА, декабрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Тула облаçĕнчи халăх пурăнакан пунктсене Хĕрлĕ Çар кунран-кун ытларах та ытларах нимĕç захватчикĕсенчен туртса илсе ирĕке кăларса пырать. Ĕнерхи кун хушшинче пĕр Болдин командирăн чаçĕсем кăна нимĕçсене 35 ялтан хăваласа кăларнă. Малта пыракан чаçсем хыççăнах связистсем çыхăнăва йĕркелесе пыраççĕ.

Нимĕçсем сывлăпран тăтăшах тапăнса тăнă пулин те, пĕр талăк хушшинчех облаçăн хĕвелтухăçĕнчи тата хĕвеланăç пайĕнчи пур район центрĕсемпе те — Алексинпа, Тарусăпа, Дубнăпа, Крапивнăпа çыхăну тытассине йĕркеленĕ. Чи хăрушă кунсенче те Мускавпа Тула хушшинче пралук тăрăх çыхăну тытасси чăрăнманни те ĕнтĕ Тула облаçĕнчи связистсен хастарлă ĕçĕнех кăтартса парать. Связистсем, сăмахран, çыхăну управленийĕн начальникĕ Курулев юлташ çавтери пысăк пуçарăхпа тата пултарулăхпа ĕçленĕ. Фашистсем проводсене татса пăрахсан, çыхăну управленийĕ проводсене тŭрлетмешкĕн телефонистсене тăватă хутчен машинăпа янă. Çак машинăсенчен пĕри те каялла тавăрăнман. Пиллĕкмĕш машинăпа вара Мыташовпа Кретов техниксем тухса кайнă. Шоссе çулĕ çинчи Сверюково ялне нимĕçсем йышăнса тăнине пĕлсен, техниксем машинăна пăрахса хăварнă те хăйсем лупашка тăрăх тавралла çавăрăнса ялтан иртнĕ. Вара çĕрле проводсене тŭрлетсе çыхăнăва йĕркеленĕ.

Пур район центрĕсене те Тулăран парти обкомĕн уполномоченнăйĕсемпе районри организацисен работникĕсем тухса кайнă.

# 25 ял йышăнса илнĕ

ТУЛА, декабрĕн 22-мĕш. **(«Правда» хаçатăн военкорĕ).** Болдин генералăн чаçĕсем, тăшмана хĕссе, кунĕпех хаярăн çапăçса малалла кайса пычĕç. Пирĕн боецсем, винтовкăпа, гранатăпа тата штыкпа тăрса çапăçса, фашистсен речĕсене арката-арката пычĕç, вĕсене флангсенчен çавăрса илсе, çĕрти шăтăксенчен хăваласа кăларса, пĕр хĕрхенмесĕр пĕтере-пĕтере тăкрĕç. Нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине, вырăнĕпе контратакăсем те тунине пăхмасăрах, Болдин юлташăн войскисем пĕр талăк хушшинче 25 яла йышăнса илчĕç.

Çак хунхине пирĕн чаçсем Н. яла тытса илни савăнăçлă событи пулса тăчĕ. Ку ял тавралăхĕнчи вырăн войскăсене çирĕплĕн вырнаçса тăма питех те майлă вырăн пулса тăрать, çакна пула нимĕçсем кунта пире хирĕç вăйлăн çапăçма хатĕрленсе тăнă. Ял çывăхĕнче чылаях тĕреклĕ укрепленисем тунă. Пирĕн боецсем флангсенчен тата тылран пырса çапнипе тăшманăн оборона линине татрĕç, яла çĕмĕрсе кĕрсе, унта тăракан фашистсен гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкрĕç. Трофейăсем чылай тытса илчĕç. Нимĕçсем, çывăхри ялсене те пулин хăйсен аллинчех хăварасăн пулса, мĕнпур вăйăсене хучĕç, анчах та вĕсен ĕç тухмарĕ.

Пирĕн чаçсенчен тепри ирхине ирех П. ялне тытса илесшĕн çапăçма пуçларĕ. Тăшман кунта та, малтанах хатĕрленĕ укрепленисемпе усă курса, пирĕн чаçсене атакăлама хăтланчĕ. Автоматчиксемпе тата минометчиксемпе вăйлăлатнă фашистсен роти, укрепленисенчен тухса, пирĕн позицисем çинелле ыткăнчĕ. Анчах та пирĕн енчен пулеметсемпе автоматсенчен вăйлăн пеме тытăнни вĕсен наступленине хĕрŭлĕхне часах чакарчĕ. 120 салтакпа офицер виллисене пăрахса хăварса, нимĕçсен ялтан тухса каймалла пулчĕ. Таракан тăшмана хыçран йĕрлесе кайса, пирĕн боецсем татах 5 яла йышăнса илчĕç.

**Н. ИЛЬИНСКИЙ.**
**(«Правда», декабрĕн 23-мĕш)**

## Укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарнă

ÇĔРПУ. Пушкартуç, Шĕпер, Йĕкĕрлар ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли 4-мĕш квартал планне декабрĕн 1-мĕш тĕлне ытлашшипех тултарнă. Анчах хăшпĕр ялсовечĕсем çав ĕçе вăхăтра туса пымаççĕ. Тавăшкасси, Лĕпсер ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли 4-мĕш квартал планне 50 процент кăна пурнăçланă.

**НИКОЛАЕВ.**

# „Цивильстрой“ колхозникĕсен пуçарăвне ырлаççĕ

ВĂРНАР. Районри колхозниксем «Цивильстрой» колхозри колхозниксем геройла Хĕрлĕ Çара ялхуçалăх продукчĕсем парса ытларах пулăшма чĕнинне ырласа йышăнаççĕ. Сентимиркăри колхоз колхозникĕсем, хăйсен пĕрлешŭллĕ пухăвĕнче «Цивильстрой» колхозникĕсен пуçарăвне ырласа, хамăран тăван Хĕрлĕ Çар валли аш-какай резервĕ тума тата апат-çимĕç продукчĕсене ытларах хатĕрлесе пама пулчĕç, кăна тума районри пĕтĕм колхозсене чĕнчĕç.

«Гигант» колхоз хăйĕн фермисенче планран иртерсе 15 сысна самăртса пама пулчĕ. Колхозниксем хăйсен хуçалăхĕсенчен 5 сысна, 10 сурăх самăртса пама тата 130 чăх тăрантарса пама пулчĕç. Колхоз оборона фондне çĕнĕрен 100 центнер тĕштырă, 30 центнер çĕрулми, 50 килограмм çăр çу, 7 центнер табак тата чылай пахча-çимĕç пама хатĕрленет.

**В. МАКСИМОВ.**

* * *

ÇĔРПУ. «Чăваш ЦИК» колхозăн правленийĕпе активĕ, Хĕрлĕ Çар валли апат-çимĕç продукчĕсен резервне тăвасси çинчен «Цивильстрой» колхозăн чĕнсе каланине сŭтсе-явса, тăван Хĕрлĕ Çар валли 75 хур самăртса пама йышăнчĕ. Çак йышăнăва колхозниксем ырларĕç.

«Цивильстрой» колхозникĕсен лайăх пуçарăвне халĕ районри ытти колхозсенче те сŭтсе-явса, конкратнăй ĕçсем тума тытăнаççĕ.

* * *

ÇĔРПУ. Ярапайкассинчи туллимар вăтам шкулти пионерсем хăйсен сборĕсенче «Цивильстрой» колхозăн колхозниксем чĕнсе каланине сŭтсе-яврĕç. «Цивильстрой» колхозникĕсен питех те кирлĕ пуçарăвĕ çинчен пионерсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсене ăнлантарса параççĕ. Ашшĕ-амăшĕсемпе каласса татăлса, шкулта вĕренекен 48 пионер Хĕрлĕ Çар валли выльăхчĕрлĕхсемпе чăх-чĕпсем самăртма тытăнчĕç. Гена Петров хăйĕн киленчĕпĕр сысна, Мария Васильева — пĕр чăх, М. Архипов — пĕр кăвакал самăртма тытăнчĕç. Галя Майковăпа Валентин Платонов пионерсем пĕрер сурăх çитĕнтерсе самăртма пулчĕç.

**Н. РУСАНОВ.**

КУКЕÇ. Пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар вăрçă фрончĕсенче çĕнтерŭ хыççăн çĕнтерŭ туса пырать. Нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарне хĕвеланăç еннелле хăвалать. Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвĕсем колхозниксене савăнтараççĕ, ялхуçалăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнŭсем тума хавхалантараççĕ.

Çĕрпŭ районĕнчи «Цивильстрой» колхозникĕсем тăшмана тĕп тума Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшас ĕçе пуçарса ячĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем валли колхозсенче апат-çимĕç продукчĕсен резервĕсене тума чĕнчĕç. Хĕрлĕ Çар валли выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕпсем самăртса хатĕрлемелле. Çакă вăл колхозниксен пархатарлă пысăк ĕçĕ пулса тăрать.

Шупашкар районĕнчи колхозсенче «Цивильстрой» колхозникĕсен чĕнĕвне хапăл туса йышăнаççĕ. Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхозри колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 5 сысна, 10 сурăх тата 30 чăх самăртса пама йышăнчĕç. Уйрăм колхозниксем хăйсен хуçалăхĕсенче 12 сурăх, 35 чăх самăртма пулчĕç. Г. Ульянова, Е. Иванова, И. Осипов, Н. Иванов колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли пĕрер сурăх самăртма тытăнчĕç.

**И. ВАСИЛЬЕВ.**

# ПИРĔН ГВАРДИ

Çапăçура çуралчĕ пирĕн гварди,
Вут витĕр тухрĕ парăнмасăр.
Тăшман шăртланчĕ, юнлă йĕр хăварчĕ...
Ут, гварди, малаллах, ут пăрăнмасăр!

Гвардеец вăл—хăюллă, паттăр,
Тĕреклĕ, чăтăмлă, сатур.
Ун хурçă чăмăрĕ аçа пек çаптăр,
Ун халăхĕн чакми хăвачĕ пур.

Гвардеец вăл — герой, пример.
Ун хыççăн полк утать, дивизи.
Эпир калатпăр: — Пĕтерер! —
Çапла гвардеецсен девизĕ.

Каппайчăх нимĕç, эс мухтаннипе
Уру айне тĕнче ŭкмерĕ.
Вĕрсе хăпартнă супăнь хăмпи пек,
Эс çурăлăн, арканĕ сан империн.

Сан салтаку чĕлхе тăсса кăларчĕ,
Вăл ывăннă, хашкать, вăл уксахлать.
Ялав хумханчĕ, пирĕн утлă гварди
Хĕвеланăçнелле юртать.

Танксем хурахсене çăрса иртеççĕ,
Пĕлĕтелле бомбовозсем хăпарчĕç.
Эпир, фронтри пекех, тылри ĕçе
Алран ŭкермĕпĕр, шан, çамрăк гварди.

Манми вунсаккăрмĕш çултах
Рабочи гварди вут-кăварччĕ.
Илсе пырах пире, илсе пырах,
Эс, Ленинла—Сталинла гварди!

**СТИХВАН ШĂВЛЫ.**

—o—

# Васкавлă заказсене васкавлă пурнăçларççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Древкомбинатри рабочисемпе работницăсем хушшинче стахановла движени анлăн сарăлса пырать. Вĕсем кашниех хăйсен ĕç нормисене икшервиçшер хут ирттерсе тултарассишĕн, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн ăмăртаççĕ.

Москвиченко юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ ноябрь уйăхĕн планне 162 процент тултарнă. Паянхи куна ку цехра рабочисем пурте нормăсене ирттерсе тултараççĕ, двухсотниксен хисепĕ ŭссех пырать. Стахановец С. Кабанин юлташ ноябрь уйăхĕнче, вăтамран илсен, кашни кун нормăна 293 процент, Н. Корнеев юлташ — 268 процент тултарса ĕçленĕ, халĕ вĕсем куллен виçшер норма тăваççĕ.

Декабрь уйăхĕнче И. Левкович, В. Никитин, юлташсем те ĕç тухăçлăх не ŭстерсе пырас тĕлĕшпе пример кăтартаççĕ. Вĕсем ответлă участокĕнче ĕçлесе, хăйсене панă задание ялан икĕ хут, уйрăм кунсенче 2,5 хут ирттерсе тултараççĕ.

Утильцехри рабочисем юлашки вăхăтра васкавлă заказсем тунă сĕрте ĕçлерĕç. Цехсенче пĕр чарăнмасăр, ирĕн-каçăн ĕç пычĕ. Калнни рабочине работница пĕр шухăшпа — задание мĕнле пулсан та хăвăртрах тата пысăк пахалăхпа пурнăçлас тесе ĕçлерĕç. Стахановка Уханова, вăтамран илсен, нормăна 400 процент, Кондратьева — 250 процент, Мурова — 235 процент тултарса пычĕç. Рабочисем çакăн пек хастарлăхпа ĕçлени цех коллективне панă заказа срокра туса пĕтерме май пачĕ.

Комбинатри ытти цехсенче те рабочисем ĕç тухăçлăхне ŭстерсе пыраççĕ, вĕсенчен чылайĕшĕсем двухсотниксемпе трехсотниксен ретне тăчĕç.

# Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илеççĕ

Шупашкарти «Пекарь» артель членĕсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илме ĕçуçсин 20 процентĕнчен кая мар сырăнчĕç. Нумайĕшĕ ĕçуçсин 30 процентĕ чухлĕ е ытларах та сырăнаççĕ. Артель коллективĕ лотерея билечĕсене мĕнпурĕ 2.560 тенкĕлĕх сырăнса илчĕ.

Çавăн пекех союзплодоовощь конторинче ĕçлекенсем те лотерея билечĕсене ĕçуçсин 20—30 процентĕ чухлĕ сырăнса илчĕç. Бухгалтер Соболева юлташпа работница Галаева юлташ ĕçуçсин 30 процентĕнчен ытларах сырăнса илчĕç. Коллектив лотерея билечĕсене 1.195 тенкĕлĕх сырăнчĕ.

**М. ВАСИЛЬЕВ.**

* * *

Укçа-тенкĕпе япала лотерейинсене сырăнса илесси хулари предприятисемпе учрежденнисенче кунран кунах сарăлса пырать. Перекат кассинче — 1580 тенкĕлĕх, Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче — 12.359 тенкĕлĕх, НКВД-ра—26 пин тенкĕлĕх, Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра — 3.460 тенкĕлĕх, «Красный кустарь» артельре — 2.630 тенкĕлĕх, «Пекарь» артельре — 2.560 тенкĕлĕх сырăннă. Кунпа пĕрлех Ленинград урамĕнчи урам комитечĕ (председателĕ Смирнова юлташ) лотерея билечĕсене 360 тенкĕлĕх сарса, укçине те пĕтĕмпех пухнă.

Анчах, кусемпе пĕрлех, çаксене те палăртмалла: хулари больницăра, стройтехникумра, халăх сучĕсенче (4-мĕш участокăр пуçне) т. ыт. хăшпĕр предприятисемпе учрежденнисенче масăллă-политикăллă ĕçе начар туса пынă пирки, çак ĕç кая юлса пырать-ха.

**М. ЧАЛДУН.**

* * *

ШАХАСАН. Уполнаркомзаг аппаратĕнче ĕçлекенсем укçа-тенкĕпе япала лотерейине 960 тенкĕлĕх сырăнчĕç. С. Михайлов юлташ — 250 тенкĕлĕх, агентсем И. Семенов, Е. Семенов, П. Лукин, Васильев, А. Зиновьев, Ф. Петров юлташсем 80-шар тенкĕлĕх тата учет ĕçĕнче ĕçлекен работниксем 50-шар тенкĕлĕх сырăнчĕç.

**А. ЗАХАРОВ.**

* * *

ИШЛЕЙ. Шетмĕпуç ялсоветĕнчи ĕçсыннисем укçа-тенкĕпе япала лотерейине ирттерме йышăннине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем, вăтам шутпа шутласан, кашниех 30-шар тенкĕлĕх сырăннă. Лотерея билечĕсене Чаканар ялсоветĕнче 2.980 тенкĕлĕх, Шурча ялсоветĕнче 4.285 тенкĕлĕх, Хăймалакасси ялсоветĕнче 4.250 тенкĕлĕх сарнă.

Çĕнĕ лотерея билечĕсене илме сырăнса, укçине те çийĕнчех тŭлеççĕ. «Самолет» колхоз членĕсем, 1.360 тенкĕлĕх сырăнса, укçине йăлтах тŭлесе татнă. Шурча ялсоветĕнче 3 пин тенке яхăн, Хăймалакасси ялсоветĕнче пин тенкĕ ытла пухса районри перекат кассине хывнă.

Лотерея билечĕсемшĕн районĕпе 15 пин тенкĕлĕх пухса перекат кассине хывнă та ĕнтĕ.

**Е. СМЕЛОВ.**

* * *

СОВЕТСКОЕ. Токшикри «Динамо» колхоз членĕсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 735 тенкĕлĕх сырăнса илнĕ. Чуманкассинчи «Трудовик» колхоз членĕсем 1.220 тенкĕлĕх, Вăрманкасри Энгельс ячĕпе тăракан колхозра 1.230 тенкĕлĕх сырăннă. Нумайĕшĕсем укçисене те çийĕнчех тŭлеççĕ. Якаткассинчи «Восход» колхоз членĕсем 1.230 тенкĕлĕх сырăнса, укçине çавăн чухнех 300 тенкĕ ытла тŭленĕ. Шуркассинчи «Красный Октябрь» колхозра лотерея билечĕсемшĕн 200 тенкĕ ытла тŭленĕ.

**ИВАНОВ.**

* * *

ЕТĔРНЕ. Кĕçĕн Шемертенри «Новое звено» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар чаçĕсен Мускав патĕнчи çитĕнĕвĕсен ячĕпе митинг туса ирттерчĕç.

— Хĕрлĕ Çар немĕçсен фашистла войскисене çапа-çапа аркатни пире ĕç фронтĕнче çĕнтерŭсем тума пулăшать. Эпĕ Хĕрлĕ Çара тур майсемпе те пулăшма тăрăшатăп. Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 30 тенкĕлĕх плетĕп,—терĕ колхоз бригадирĕ Д. Диняков.

Пĕр саманткрах 45 çын лотерея билечĕсене илме сырăнчĕç. 63 çултах К. Алексеев юлташ 20 тенкĕлĕх сырăнчĕ. И. Захаров, Ф. Данилов, Ф. Николаев, П. Никифоров т. ыт. колхозниксем те 20-шер тенкĕлĕх сырăнчĕç. Нумайĕшĕсем укçине те çавăнтах тŭлерĕç.

Лотерея билечĕсене илме Талуйĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра та пысăк хаваслăхпа сырăнаççĕ. Колхоз бригадирĕ М. Китов юлташ 40 тенкĕлĕх сырăнса укçине те пăрса татрĕ. М. Утрендеев 80 тенкĕлĕх сырăнчĕ. Кашни ĕçлеме пултаракан çын 20 тенкĕрен кая мар сырăнать. Пĕр кун хушшинче 800 тенкĕлĕх сырăнса, 400 тенкине пухса перекат кассине хывнĕç.

**Я. СОРОКИН.**

* * *

Çĕрпŭ районĕ укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене паянхи куна 156.350 тенкĕлĕх вырнаçтарса, плана ытлашшипех тултарнă. Япала лотерейин билечĕсене сарас ĕçе уйрăмăнах колхозниксемпе колхозницăсем активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем пĕтĕмпе 69 пин тенкĕ вырăнне 79.050 тенкĕлĕх сырăннă.

**Г. П.**

# Эвакуациленĕ заводсем хăйсен мĕнпур вăй-хăвачĕпе ĕçлеççĕ

I

Фронт пирĕн хуласенчен пĕрин патне сывăхарсан, хула тĕлĕнчи сывлăша час-часах çапăçусем пулса иртме тытăнсан, хулари чылай предприятисене, çав шутрах боевой самолетсене хĕçпăшаллантармалли агрегатсем туса кăларакан завода та тыла куçарма йышăннă.

Завода куçарма приказ илсен, завод коллективĕ, тăшман валли çара стеначĕсемсĕр пуçне урăх нимĕн те хăварас мар тесе, мĕнпур оборудованисене, детальсене, инструментсене тата ытти пĕтĕм хатĕрсене пĕрле илсе кайма йышăннă. Çакăнпа пĕрлех заводăн ĕçлемен вăхăтне май килнĕ таранах чакарас тесе, завода куçарса каяс ĕçе лайăхрах организацилес задача тухса тăнă.

Завода куçарса каймашкăн йĕркеллĕ те хыпаланмасăр хатĕрленнĕ. Çак ĕçе инженерсем, техниксем, рабочисем кăна мар, завод управленийĕн сотрудникĕсем те — бухгалтерсем, плановиксем, снабженецсем, машинисткăсем, курьерсем хутшăнса ĕçленĕ. Станоксемпе машинăсен сŭтнĕ пайĕсене типтерлĕн елпĕксене пухса хунă. Электричество кабелĕсене çĕр айĕнчен чавса кăларнă, пур телефон аппарачĕсене те пухса чикнĕ, канцеляринчи чернильница таврапĕсене те манса хăварман.

Завод пурлăхне çул çинче рабочисем сыхласа пынă. Вĕсем оборудовани тĕрĕс-тĕкеллĕхне асăрханă, платформăсем çинчи груза çумăр тивесрен лайăх витнипе витменнине, ещĕксем хăйсен вырăнĕсенчен куçса сиенленнипе сиенленменнине тĕрĕсленĕ. Пĕр-пĕр чугунçул станцине çитсен, бригадирсем çийĕнчех станци начальникĕ патне кайса, хăйсен составне хăвăртрах ăсатма ыйтнă.

Юлашкинчен состав завода вырнаçтарма палăртнă хулана çитнĕ. Хаклăран та хаклă вăхăта пĕр минута та сая ямасăр, коллектив бригадăсене уйăрлнă та, вара оборудование вагонсенчен пушатма, станоксене вырнаçтарса лартма, завод корпусĕсем пулмалли çуртĕрсене йĕркелеме тытăннă. Темĕн пек ыйăр ĕç пулсан та, ĕçрен никам та пăрăнса юлман. Оборудование цехсене вырнаçтарса лартнă, станоксене ĕçе янă, вара завод татах хăйĕн производствăллă тулăх пурăнăçĕпе пурăна пуçланă.

Анчах куçса çŭренни заводăн ĕçне пĕр уйăх хушши ытла чарса тăнă, çавăнпа та ĕнтĕ завод çакăн чухлĕ вăхăт хушшинех продукци парайман. Заводри рабочисемпе специалистсем куçса çŭренĕ пирки хăйсен ĕçĕ вăхăтлăха чарăнса тăни фронта хĕçпăшал парса тăрассине мĕн чухлĕ те пулин чакарнипе килĕшмен. Вара çынсем вăрçă вăхăтĕнче те курман хăвăртлăхсемпе ĕçлеме пуçланă. Вĕсем тăрăпшса ĕçлени питĕ паха результатсем панă. Уйăх вĕçленнĕ тĕле вĕсем завод çул çинче пулнă вăхăтра çĕрпыв умĕнче парăма кĕнине ытлашшипех тŭлесе татнă, иртнĕ уйăхрипе танлаштарсан виçĕ хута яхăн ŭстернĕ плана ытлашшипех тултарнă, ноябрь уйăхĕнчи задание те вĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ.

Паллах ĕнтĕ, çаксене нихăшне те йывăрлăхсене çĕнтермесĕр туман. Анчах коллектив çак йывăрлăхсене патăрăн чăтса иртернĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн фронт умĕнчи ответлăхĕ ŭснине пĕлсе тăнă.

Урăх вырăна куçса килнĕ пирки килти пурнăçра вăхăтлăха тухса тăнă çитменлĕхсене тата ытти хăшпĕр йĕркесĕрлĕхсене те рабочисем кайри планă хунă. Тиесе килнĕ оборудование вагонсенчен пушатма кирлĕ вăхăтра хăйсен ирĕкĕпех грузчиксем пулса ĕçленĕ, пысăк квалификациллĕ инженерсем халĕ, хăйсен специальноçĕпе тумалли тĕп ĕçсемсĕр пуçне, хăйсем çине урăх ĕçсем те илнĕ. Инженер Андреев, рядовой слесарь пулса ĕçлесе, детальсене пухас ĕçе активлăн хутшăннă. Аслă технолог Фастовец фрезернăй станокпа ĕçленĕ. Аслă механик отделĕнчи инженерсем çĕнĕ вырăнта нумай вăхăт хушши нимĕн усăсăр выртнă сакăр станока шыраса тупнă та вĕсене юсаса ĕçе янă.

Завода ĕçе ярас тĕлĕшпе пынă хĕрŭллĕ ĕç завод коллективне облаçри икĕ воскресникре активлăн хутшăнма кансĕрлемен. Çак воскресниксенче ĕçлесе тупнă 44 пин тенке рабочисем оборона фондне панă.

Октябрь уявĕ ячĕпе завод çĕнĕ тăватă издели туса кăларса, вĕсене Хĕрлĕ Çара парнеленĕ. Çак изделисем ĕнтĕ совет авиацийĕн ĕçĕсене татах та ытларах ăнăçлăх кŭреççĕ.

II

Тылри çак хуланах тепĕр çар заводчĕ куçса пынă та вырăнти хăйпе пĕр йышши заводпа пĕрлешнĕ. Турттарса пыни икĕ эрне иртсенех çĕнĕрен илсе килнĕ çĕршер станоксем продукци туса кăларма та тытăннă.

Çавăн пек рекордлă хăвăртлăха «хăнасем» те, «хуçисем» те пĕрле шухăшласа, питĕ тĕплĕн те тĕрĕс туса хатĕрленĕ план тăрăх тăрăпшса ĕçленипе кăна тума май килнĕ. «Хуçисем», фронт çывăхĕнчен хăйсем патне завод куçса килмеллине пĕлсенех, куçса килмелли заводăн руководителĕсемпе çийĕнчех çыхăннă та, мĕнле-мĕнле оборудовани килессине, рабочисемпе специалистсем мĕн чухлĕ килессине пĕлтĕç. Çапла ĕнтĕ, состав пырса çитичченех тылри предприятире ăста мĕнле станок лартмаллине палăртса хунă. Çак вăхăтрах килекен мĕнпур оборудование вырнаçтарса лартма завод корпусĕсенче вырăн çитменнине шутласа кăларнă. Вара васкасах икĕ склада пушатса, вĕсенчен производство цехĕсем тунă.

Куçса килекен заводри станок-автоматсене лартмашкăн малтанах фундаментсем туса хунă, электропроводка кĕртнĕ. Вара грузăн малтанхи пайĕ пырса çитсен, çийĕнчех монтаж тума пуçланă. Малтанах шутласа çакăн пек тĕплĕн хатĕрленни темĕн чухлĕ вăхăта перекетлесе хăварнă. Станока монтаж туса пĕтерсенех, ăна çавăнтах ĕçе янă. Икĕ завочĕ те пĕр пек продукцие туса кăларнă пирки ĕç татах та ăнăçлăрах пулса пынă.

Вара килнĕ специалистсемпе мĕнле усă курас ыйту тухса тăнă. Çак ыйтăва та çăмăллăнах татса панă, мĕншĕн тесен нихăшĕ те хăйсен уйрăм пĕчĕк интересĕсемшĕн çеç тăрăшман, нихăшĕ те специалистсене «хăйсеннисем» тата «ытти сем» çине пайламан. Пурте—«хуçисем» те, «хăнисем» те—ĕçĕн пĕтĕмĕпле интересĕсене çеç пăхăнса ĕçленĕ. Куçса килнĕ заводăн аслă инженерне çĕнĕ вырăнта аслă инженерăн заместителĕ туса хунă. Пĕр пысăк цехăн начальникне фронт çывăхĕнчен куçса килнĕ заводри инженера лартнă, ун умĕнчи начальника, питех опытлă мар специалиста, аслă мастер туса урăх ĕçе куçарнă. Ытти цехсен руководствинче те çакăн пекех улшăнусем пулса иртнĕ.

Икĕ коллектив пĕр-пĕрне хăйсен производствăллă опычĕсемпе паллаштарни завода питĕ пысăк пулăшу панă. Шăпах ĕнтĕ пĕр-пĕринчен опытсем илсе ĕçленĕ пирки коллективăн завод туса кăларакан продукцин ассортиментне çичĕ хут ытларах ŭстерме май килнĕ.

Пĕрлешнĕ икĕ коллектив лайăх ĕçлекен пĕр çемье пулса тăнă. Куçса килнĕ завод коллективĕн членĕсем çĕнĕ вырăна хăнăхса çитрĕç, вырăнти работниксемпе туслашрĕç, кунта ĕнтĕ вĕсем хăйсене текех хăнасем тесе шутламаççĕ. Пĕрле тăрăпшса ĕçленине пула завод октябрь уйăхĕнче, сентябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, чылай ытларах продукци туса кăларчĕ. Завод ноябрь уйăхĕнче туса кăларнă продукци хисепĕ татах та ŭсрĕ. Фашистсен йыткĕтĕвĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, завод хăй туса кăларакан изделисене лайăхлатнăçемĕн лайăхлатса пырать тата çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем конструкцилес тĕлĕшпе ĕçлет.

**Н-ски хула. Н. ОСИПОВ.**

# Çĕнĕлле ĕçлекен вулав çурчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефон тăрăх.) Хальхи вăхăтра ялсенчи кашни вулав çурчĕ, кашни клуб чăн-чăн агитпункт пулса тăмалла. Ялсенчи вулав çурчĕсен, клубсен кунран кун туса пымалли ĕçĕ вăл—колхозниксен массисене фронтри ĕçсемпе тăван çĕршыв пурнăçĕ çинчен тата тĕнчери событисем çинчен тĕплĕн çутатса парасси, çакăнпа пĕрлех тата мĕнпур ĕçсыннисене паянхи задачăсем çинчен ăнлантарса парасси, çав задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилесси пулса тăрать. Çакăн пек ĕçлекен вулав çурчĕсемпе клубсене çеç вĕсем хăйсен ĕçĕсене хальхи отечественнăй вăрçă вăхăчĕ хушнă пек çĕнетсе çитернĕ теме пулать.

Пирĕн республикăра лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсем сахал мар. Илĕпĕр Кушарти (Красноармейски р.) вулав çуртне. Кушарти вулав çурчĕ хăйĕн паянхи задачисене лайăх ăнланса çитнĕ темелле, çавăнпа та вăл хăйĕн ĕçĕсене вăрçă вăхăтне кирлĕ пек туса пырать.

Чи малтанах ку вулав çурчĕ пĕтĕм ялсоветĕнчи активистсене хăй тавра пĕтĕртерсе çирĕп агитколлектив туса хучĕ. Агитколлективра вырăнти учительсем, комсомолецсем, ялсовет депутачĕсем тата колхоз активĕ пĕрлешсе тăраççĕ. Агитколлектива вулав çурчĕн заведующийĕ учитель Скворцов юлташ ертсе пырать. Скворцов—комсомолец, халăх хушшинче ĕçлеме юратакан, тимлĕ сын. Вăл пуçарнипе агитколлектив хастарлăн ĕçлесе тăрать.

Кушар ялсоветĕнче виçĕ колхоз: «Свобода», «Большевик» тата Буденный ячĕпе тăракан колхоз. Агитколлектив хăйĕн уйрăм агитаторĕсене çак колхозсен бригадисем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем вара, агитколлектив паракан кăтартусем тăрăх, бригадăсенче ĕçлеççĕ.

Агитаторсенчен вырăнти учитель Афанасьев юлташпа Уткин агроном пысăк ĕçсем тăваççĕ. Афанасьев юлташ час-часах колхозсене кайса пухусем, каласусем туса ирттерет. Вăл отечественнăй вăрçă çинчен тата тĕнчери лару-тăру çинчен тăвакан докладсемпе каласусене колхозниксем пысăк хаваслăхпа итлеççĕ.

Агроном Уткин юлташ, тăтăшах колхозниксене пухса, агротехника тĕлĕшпе вĕрентсе пырать. Халĕ вăл колхозсене çитес çурăкине хатĕрленес май мĕн тумаллисем çинчен тата вĕсене мĕнле майпа пурнăçламалли çинчен вĕрентет.

Вулав çуртĕнче кашни каçах пухусем, каласусем пулса иртеççĕ; радио итлеççĕ тата ытти те. Вулав çурчĕн заведующийĕ Н. Скворцов юлташ радиоприемникне яланах юсавлă тытать. Çакна пула вулав çуртне Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене итлеме кулленех халăх нумай пухăнать. Радио итленĕ хыççăн, кам мĕне те пулин ăнланайман пулсан, вĕсене агитаторсем ăнлантарса параççĕ.

Вулав çурчĕ Сталин юлташ докладĕ тирки нумай каласусем туса ирттерчĕ. Çак каласусенче Сталин докладĕнчен колхозниксем умне тухса тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Колхоз активисчĕсенчен агитколлектива Ильин комсомолец тăрăшса ĕçлет. Вăл вулав çуртне пухăннă колхозниксене тăтăшах хаçатсем вуласа парать.

Вулав çурчĕ çумĕнче «Çăлтăр» ятлă стена хаçачĕ тăтăшах тухса тăрать. Вăл кăçал пурĕ 20 номер тухнă. Хаçат колхозсенчи тата ялсоветĕнчи мĕнпур çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене сăнласа кăтартать.

Вулав çурчĕ çумĕнчи агитколлектив хастарлăн ĕçленине пула Кушар ялсоветĕнчи колхозсем те хăйсен ĕçĕсене лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем государствăна памалли парăмсене пурте тахçанах татнă. «Большевик» колхоз тахçанах авăн çапса пĕтернĕ, «Свобода» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те çак кунсенчех çапса пĕтереççĕ. Халĕ колхоз уйĕсенче юр тытас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Вулав çурчĕ халăха çĕршыв оборонин ĕçĕсене хутшăнтарас пирки те пикенсе ĕçлет. Вулав çурчĕ пуçарнипех бронепоезд тума 1000 тенке яхăн пухса панă, государствăна укçа-тенкĕпе япала лотерейĕн билечĕсене 1000 тенкĕ ытларах сарнă. Çавăн пекех вулав çурчĕ тимĕр-тăмăр пухса парас тĕлĕшпе тата Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтир пухас пирки те тăрăшса ĕçленĕ.

Кусемĕр пуçне, халăха тăшман сывлăшран тапăнинчен сыхланмашкăн вĕрентес шутпа, вулав çурчĕ хашни колхозрах ПВХО нормисене вĕренмелли кружоксем организацилеме. Вăл кружоксенчен пурĕ 392 колхозник вĕренсе тухнă, ПВХО нормисем тăрăх 20 шкул ачине вĕрентсе кăларнă.

Çапла, Кушарти вулав çурчĕ хăйĕн ĕçĕсене, вăрçă вăхăчĕ хушнă пек, активлăн тата çĕнĕлле туса пырать.

**И. ХАТАЕВСКИЙ.**

# Çĕнĕ çула ĕç тухăçлăхне ӳстернипе кĕтсе илеççĕ

Вăрнарти «Труд» промартель членĕсем производствăллă плана 144 процент ытла тултарнă. Артельре нормăна 100 процентран кая тултараканни пĕр çын та çук. Паттăр Хĕрлĕ Çар туса пыракан çитĕнӳсемпе хавхаланнă рабочисем ĕç тухăçлăхне кунран-кун ӳстерсе пыраççĕ. Токарьсем И. Сотов, В. Лапин юлташсем сменăри нормăна 138—153 процент таран тултараççĕ.

Урапа-çунасем тăвакан цехра 60 çула çитнĕ мастер Курпатов юлташ ĕç нормине 160—170-шер процент тултарса пырать.

Йывăç каскалакан цехра 67 çулти Н. Васильев юлташ хăйĕн ывăлĕпе И. Васильевпа пĕрле ĕçлет. Вĕсем сменăри нормăна 300—400 процент таран тултараççĕ.

Çакăн пек ĕçлекен стахановецсен шучĕ ӳссех пырать. Артельре ĕçлекенсен коллективĕ 1942 çула производствăлă плана 160 процент тултарнипе кĕтсе илме сăмах панă. Халĕ вĕсем хăйсен обязательствине пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

**М. ДАНИЛОВ.**

# Çулталăк планне тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри предприятисемпе промысла артелĕсенче çулталăкри производство планне тултарассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. «Партизан» промысла артелĕ, механически арман, çăкăр пĕçерекенсен коллективĕсем хăйсен çулталăкри программисене ытлашшипех тултарчĕç. Декабрĕн малтанхи 10 кунĕ хушшинче кăна вĕсем планран ирттерсе государствăна темиçе вуншар пин тенкĕлĕх продукци паччĕç.

Ширшов ячĕпе тăракан çу завочĕ, «Красный Октябрь» артель, пищекомбинат 11 уйăхри плансене ытлашшипех тултарнă. Çитес вăхăтра вĕсем çулталăк планне тултараççĕ. Древкомбинат коллективĕ те 1941 çулта çитĕнӳсем тунипе вĕçлессишĕн кĕрешет.

# Ĕç фронтĕнчи паттăрсем

КАНАШ. Сталин ячĕпе тăракан промартель коллективĕ отечественнăй вăрçăччен те начар мар ĕçленĕ. Артель кашни уйăхрах производство планне ирттерсе тултарса пынă, чылай рабочисем ĕç нормине пĕрре çурă е ытларах та тултарса ĕçленĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа артель хăйĕн ĕçне татах та лайăхлатнă, вăл фронт валли васкавлă заказсем тума тытăнчĕ. Артель членĕсем, хăйсене фронтри боецсем пек шутласа, вăхăта-мĕне пăхмасăр ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Çара, тăван çĕршыва мĕн кирлине туса парассишĕн пĕтĕм вăйĕсене хураççĕ.

Пĕр уйăх каярах артель Хĕрлĕ Çар валли çунасем туса кăларма уйрăм задани илнĕ. Çав задание пурнăçлассине пĕр тăван Василий, Иван, Федор Копыловсем тата Сольниковпа Слепов стахановецсем хăйсем çине илнĕ. Вăл ĕçе тума сахалтан та 24 çын кирлĕ пулнă, анчах вĕсем кашниех тăватшар, пилĕкшер çын тумалли ĕçе тунă. Çапла вара çуна туса кăлармалли задание срокра пурнăçланă. Асăннă юлташсене артелĕн пĕтĕм коллективĕ ырлать. «Пирĕн артельри паллă трехсотниксем», теççĕ вĕсем çинчен.

— Юлташсем фронтра пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçнă вăхăтра эпир алăсене усса ларма пултаймастпăр. Пире хуть те мĕнле задани парсан та, эпир ăна пурнăçлатпăр, — теççĕ пĕртăван Копыловсем.

Декабрĕн 5-мĕшĕнче пĕртăван Василий, Иван, Федор Копыловсем тата Сольниковпа Слепов юлташсемех йĕлтĕрсем тумалли ответлă задани илчĕç. Халĕ вĕсем çак ĕçе хĕрсех тытăнчĕç. Вĕсем кунсерен икшер-виçшер норма тултараççĕ, васкавлă заказа çĕнĕ çулччен пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Артелĕн паллă сыннисем, фронт заказĕсене пурнăçласситĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекенсем, татах та нумай. Маркеловпа Павлов токарьсем васкавлă задание пурнăçланă çĕртре ноябрь уйăхĕнчи плана 223 процент тултарнă. Халĕ вĕсем фронт валли пĕр детале туса пĕтернĕ хыççăн татах тепĕр деталь тума тытăннă. Ку ĕçре те вĕсем стахановла ĕçлесе, кунсерен виçшер нормăна яхăн тултараççĕ.

Çĕнĕ ĕçре куллен çĕнĕ сынсем палăраççĕ. Зелейкин юлташ, хăйĕн арăмĕпе пĕрле канма пĕлмесĕр ĕçлесе, кунне 200 кашăк туса кăларас вырăнне 300 кашăк туса кăларать. Цыпленковпа Писарев юлташсем çуна тупанĕсем авнă çĕртре ĕçлесе, кашни кун икшер-виçшер норма тăваççĕ.

Стахановецсем çакăн пек хавхаланупа ĕçлени артель коллективне çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пулăшать. Коллектив кашни уйăхра хăйне панă плана ирттерсе тултарать, ытларах продукци кăларнипе гитлерла захватчиксене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать.

Артель коллективĕ, хăй тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, татах та пысăкрах ӳсĕмсем тăвассишĕн кĕрешет.

**И. МАЛОВ,**
**И. КОРНИЛОВ.**

# Фронт хыпарĕсем çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ

КАНАШ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче тунă çĕнтерӳсем çинчен калакан ырă хыпар районри ĕççыннисене çĕнĕ хавхалану кӳреççĕ. Çав çĕнтерӳсен ячĕпе предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче, шкулсенче рабочисемпе служащисен, колхозниксен митингĕсемпе пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Тухса каласакансем хăйсен çулăмлă сăмахĕсенче пирĕн Хĕрлĕ Çар, нимĕç оккупанчĕсене тĕппипех пĕтерсе тăкса, çĕнтерӳ тăвассине шанса çинчен каласаççĕ, фронта, çĕршыва пулăшассине вăйлатма, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума сăмах параççĕ.

Çак ыйтупах вагонсем юсакан заводри рабочисемпе инженерно-технически работниксен те митинг пулнă. Унта стахановец-автоматчик Рассказчиков юлташ нормăна 3—4 хут тултарса ĕçлеме обязательство илнĕ. Халĕ вăл хăйĕн обязательствине чыслăн пурнăçлать: кашни кун 4—5-шер норма тултарать.

Слесарь-котельщиксен Дохленко юлташ ертсе пыракан бригади хăйĕн умне ĕç тухăçне кунран-кун хăпартса пырас задача лартнă. Чăнах та, халичен вĕсем сменăра нормăна 250-шар процент тултарса пынă пулсан, халĕ 300-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Слесарьсен Юрковский юлташ ертсе пыракан бригади те сменăра задание 205 процент тултарать.

Çак кунсенче чылай стахановецсем ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерчĕç. Автоматчик Воробьев, слесарь-клепальщик Кузнецов, комсомолец-сверловщик Кузнецов, коммунист-фрезеровщик Осипов юлташсем нормăна кашни кун 4—5 хут ирттерсе тултаракан пулчĕç.

Кузнечнăй цехри стахановецсем: Юнах, Никитин, Третьяк тата Самохвалов юлташсем халĕ ĕç нормине 2 хут ытларах тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем малашне ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерме, нормăна 3 хут ытла тултарса ĕçлеме, пахалăх енĕпе лайăхрах продукци туса кăларма пуланă.

Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче тунă çĕнтерӳ инвалидсен «Красный воин» артелĕнче ĕçлекенсене те ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ. Артель çулталăкри производство планне 160 процент тултарнă, планран ирттерсе 383 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Артельри рабочисенчен 70 процентĕ стахановецсемпе ударниксен ретне тăма тивĕç илнĕ. Вĕсенчен Ложкина, Максимова, Николаева, Александров юлташсем нормăна 2—3 хут тултарса ĕçлеççĕ.

**Т. ИВАНОВ.**

# Çĕвĕçсем татах та тухăçлăрах ĕçлеме пуланă

КУКЕÇ. (**Телефонпа**). Инвалидсен артелĕнче ĕçлекенсем Совет Информаци Бюровĕ Мускав патне пымалли вырăнсенче нимĕçсем çарĕсем поражени тӳсни çинчен пĕлтерсенех пуху туса ирттерчĕç. Пухура çĕвĕ çĕлекен цех заведующийĕ Хмелев юлташ çапла каларĕ:

— Пирĕн цех хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пырать. Çĕвĕçсем вăхăта тата вай шеллемесĕр, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çĕвĕ çĕлекенсем О. Васильева, Ю. Михайлова, К. Михайлова, А. Егорова юлташсем нормăна яланах ирттерсе тултараççĕ, ĕç пахалăхĕ лайăх пулать. Çапла ĕçлеме пирĕн цех çулталăкри плана 900 процент тултарчĕ. Малашне татах та лайăхрах ĕçлеме пулатăр.

Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнтерсе тунă çĕнтерӳсем рабочисене производствăра татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цех çулталăкри плана 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 1000 процентран кая мар, артель коллективĕ—130 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕ.

**Т. ЛОГИНОВ.**

# Фермăри стахановецсем

Егоркино ялĕнчен инçех мар, çурçĕр енче, икĕ çурт ларать. Вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма çук, иккĕшĕ те пĕр пек виçеллĕ. Катаран кăна мар, сывăхран та вĕсем илемлĕн курăнаççĕ.

Вăл çуртсене выльăх-чĕрлĕхсене хупса усрама тунă. Халĕ кунта «Большевик» колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем вырнаçнă. Кăнтăрла-и е каçхине, кашни кун тенĕ пекех ку вырăнта пĕр вăхăт хушши самăр ĕнесем, сыснасем çӳренине курма пулать. Тепĕр чухне ферма умĕнчен иртсе каякансем, чăрăнса тăрса, чылайччен çав выльăхсем çине пăхса тăраççĕ.

— Аван, аван, епле выляççĕ. Лайăх апат-çимĕç паратăр пулĕ, — теççĕ иртен-çӳренсем.

Ку сăмахсем фермăра ĕçлекенсене килĕшӳллĕ пек пулас. Вĕсем кăшт кулса илеççĕ те çапла ответлеççĕ:

— Чăн, лайăх апат çитеретпĕр, анчах виçесĕр мар, нормăна. Вăхăтра çитеретпĕр, вăхăтра шăваратпăр, — теççĕ.

— Тĕрĕс сăмах. Выльăх самăр пулласси, ăна пăхакантан килет.

«Большевик» колхоз ферминче ĕçлекенсем хушшинче выльăх-чĕрлĕх пăхас тĕлĕшпе ятарласа курсран вĕренсе тухнисем çук, чылайăшĕсем фермăра мĕнпурĕ те 4—5 уйăх хушши кăна ĕçлеççĕ. Çапах та вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлĕн туса пыраççĕ. Ăна çак факт çирĕплетсе парать: колхозра выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ӳссех пырать, пур фермăсем валли те выльăхсем туянса çитернĕ. Сыспа ферминче 60 пуç пулмалла, халь 67 пуç, сурăх ферминче 200 пуç ӳсрас вырăнне 260 пуç ӳсраççĕ. Колхоз председателĕ коммунист Корнилов юлташ калана тăрăх, кăçал пĕр выльăх та вилмен.

— Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем ĕçре пример кăтартаççĕ. Уркенмеççĕ вĕсем, ырлама тивĕçлĕ, — тет колхоз председателĕ.

Таня Сидорова 20 çулта кăна, иртнĕ çулсенче вăл доярка пулса ĕçленĕ. Хастарлă колхозницăна иртнĕ уйăхра ферма заведующийĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă. Сидорова юлташ панă ĕçе чыслăн пурнăçласа пырать 18 çулти Катя Бельцовăпа Васса Седова юлташсем кашниех 15-шер ĕне пăхаççĕ. Седова юлташ ку ĕçе октябрь уйăхĕнче куçнă. Иккĕшĕ те фермăран тухма пĕлмеççĕ, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

Маруся Никитина çинчен те колхозра ырă ят çӳрет. Ăна пурте ырлаççĕ. Çичĕ çул каялла вăл сысна фермине ĕçлеме куçнă пулнă. Ун чухне вăл цикамшăн та паллă пулман, мĕн хушшинне итленĕ, ĕçе вăхăтра тума тăрăшнă. Фермăра ĕçлекенсем кăна «çирчĕ хĕр» тесе чĕннĕ.

Халĕ Маруся чи лайăх животноводсенчен пĕри. Вăл пĕчченех 36 сысна пăхать, пурте вĕсем мăнтăр.

—Те хăнăхса çитнĕрен, мана ĕçлеме çăмăл пек туйăнать. Сыснасене хăш вăхăтра мĕнле апат çитермеллине эпĕ лайăх пĕлетĕп. Вĕсене вăхăтра çитеретĕп, вăхăтра уçăларатăп. Манăн сыснасем нихăçан та чирлемеççĕ, — тесе каласа парать Никитина юлташ.

Маруся Никитинăпа пĕрле Пелагея Никитина ĕçлет. Вăл та сыснасене лайăх пăхать. Кăçал акă вăл икĕ амаран 22 çăвăр пăхса çитĕнтерчĕ.

Марусяпа Пелагея Никитинăсем пăхакан сыснасенчен кăçал 38-шĕ çăвăрламалла. Стахановкăсем вĕсене пурне те лайăх пăхса ӳстерме пуланă.

Сурăх ферминче пĕр тăван Яковпа Иван Бурлаковсем ĕçлеççĕ. Вĕсем 18 çула та çитеймен-ха, пĕри вĕсенчен кăçал 16 çула çеç кайрĕ. Ĕçе юратаканскем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кăçал иккĕшĕ те 160 сурăхран 180 путек илчĕç, вилнисем пулман. Колхозниксене ĕçмĕн хушса тӳлемелли çинчен тухнă постановлени тăрăх вĕсем виçшер килограмм çăм илчĕç.

«Большевик» колхоз фермисенче ĕçлекенсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче мĕнле те пулин лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлеçĕ, фронта ытларах пулăшса пырас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Вĕсем, тăван Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таран аш-какай, сĕт-çу парса тăрас тесе, хăйсене пăхма панă выльăхсене мăнтăр тăвассишĕн, вĕсен продуктивнăçне ӳстерсе пырассишĕн тăрăшаççĕ.

**Х. ЛИСИН.**

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**).

# Выльăх апачĕ хатĕрлемелли кухня

Ку колхозра пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăваççĕ. Колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртсе авăн çапса пĕтернипе пĕр вăхăтрах выльăх-чĕрлĕхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Выльăхсене кашни уйăхра мĕнле апат çитермеллине, куллен мĕн чухлĕ расходламаллине палăртса график тунă. Утă-улăм хатĕрленипе пĕрлех çĕрулми, выльăх кăшманĕ çумай хатĕрленĕ. Сăмахран, кашни сĕне куллен 12—15 килограмм кăшман çитерсен те, кăшман 1942 çулти май уйăхĕччен çитерме çитет. Фермăсем валли 70 тонна силос хывса хăварнă. Октябрь тата ноябрь уйăхĕсенче 20 тонна ытла силос çитернĕ. Декабрь уйăхĕнче выльăх кăшманĕпе пĕрлех кашни кунах çĕрулми çитерсе пынă.

Кухня пысăках мар, анчах апатсем хатĕрлеме çителĕклĕ. Улăма пăспа çемçетме 2 центнер таран турăнă улăм кĕрекен ларь пур. Ăна кухня кăмаки çумне шăлса лартнă, хуранпа пĕрлештернĕ. Çавăн пекех писнĕ тырра е çăйăх болтушкине йӳçĕтмелли каткасем, пыв тытмалли каткасем, кăшман турамаллисем те пур.

Выльăх апатне кухньăра хатĕрлесе тăрантарнипе выльăхсен продуктивнăçĕ ӳссех пырать. Иртнĕ çулпа танлаштарсан, кăçал выльăх-чĕрлĕх продуктивнăçĕ чылай ӳсрĕ. Иртнĕ çулта ĕнесенчен 4600 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал 10 уйăх хушшинче 8791 литр сĕт суса илнĕ. Ферма 1941 çулшăн тата 1942 çулти пĕрремĕш кварталшăн сĕт-çу, аш-какай парса татнă.

Халĕ ĕнесем пăруларĕç. «Заря» тата «Меркурий» ятлă пăрусем талăкра 600-шер грамм хутшăнса пыраççĕ. Пăрулламалли ĕнесене, пăрусене пăхса çитĕнтерме паха условисем тунă. Кăçал туса çитернĕ стандартлă витере пăрулламалли ĕнесене хупмалли çутă пӳлĕм пур. Унта ăшă пулать.

Çакăн пек ĕçлеççĕ «Пархикасси» (Ишлей р.) колхозри фермăсенче. Кунта выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленĕç.

**С. ГОРЛАНОВ.**

# Хĕрарăмсем пример кăтартаççĕ

Отечественнăй вăрçă пуçлансан колхозсенчи чылай арçынсем фронта тухса кайрĕç. Вĕсен вырăнне хĕрарăмсем йышăнчĕç. Анна Николаева юлташ, отечественнăй вăрçă пуçлансанах, Чăрăш Хирлеп ялсовет (Калинински р.) председателĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Вăл хăйне шанса панă ĕçе кăтартуллăн туса пырать. Ялсовет ĕçне колхозсенчи хĕрарăмсене активлăн явăçтарать. Ялсовета кĕрекен «Радио», «Строитель» тата «Дружба» колхозсем, Николаева юлташ вĕсене ĕçре пулăшса пынипе, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç.

— Малтанхи кунсенче ĕç питĕ йывăр пек туйăнатчĕ. Халĕ çитĕ хăнăхса çитрĕм, актив пулăшса пынипе ĕçсене вăхăтра туса пыракан пултăмăр,—тесе каласа парать Николаева юлташ.

Николаева юлташ ялсовет исполкомĕн канцелярийĕнче сахал ларать, вăл ытларах колхозсенче, масса хушшинче пулать, вĕсемпе каласать, ĕçĕн юлса пыракан енĕсене палăртать, вĕсене çийĕнчех тӳрлетме паха сĕнӳсем парать.

Кăçалхи çул колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç. Ялсовета кĕрекен пур колхозсем те авăн çапса пĕтернĕ, халĕ тупăшсене валеççе пама хатĕрленеççĕ. «Радио» колхоз кашни ĕçкунĕ тăрăх тăваткăтăр килограмм тĕштырă, икшер килограмм ытларах çĕрулми валеççе пама палăртнă.

Кăçал колхозсенче тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес, кĕрхи тырăсене акса хăварас, çавăн çапас ĕçсенче, пĕр сăмахпа каласан, пур ĕçре те хĕрарăмсем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç. «Радио» колхозра В. Иванова, П. Михайлова, М. Михайлова, К. Павлова, М. Степанова, А. Иванова колхозницăсем ырми-канми ĕçлерĕç, чыттисене пример кăтартса пычĕç.

— Пирĕн арçынсем фронтра тăшмана хирĕç паттăрлăн çапăçаççĕ. Эпир, вĕсен арăмĕсем, колхозра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр, çĕршыва тата фронта ялхуçалăх продукчĕсем парса пулăшатпăр,—тесе каласа парать М. Михайлова юлташ. Унăн упăшки фронтра фашистла юрĕсĕрсене хирĕç кĕрешет.

Ялсовета кĕрекен колхозсем хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Вăрлăхсене çителĕклĕ таран тасатса хунă. Тимĕрçĕ лаççинче плугсене, сĕрсесене, сеялкăсене юсаççĕ.

**М. ЧАЛДУН.**

# Трактористкăсен курсĕ

«Кашни колхоз хăйăн членĕсенчен пĕрер тракториста е комбайнерка вĕрентсе хатĕрлетĕр. Хĕрарăмсем, арçынсен профессийĕсене вĕренĕр. Фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăрăр!» Çапла чĕнсе каларĕç Ишлейри машинно-тракторнăй станцинчи трактористкăсем колхозсенчи хĕрарăмсем патне янă хăйсен сыравĕнче.

Трактористкăсем чĕнсе каланине колхозсенчи хĕрарăмсем хапăл туса йышăнчĕç. Вĕсем тракторпа е комбайнпа ĕçлеме вĕренме тытăнчĕç. Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Ишлейри МТС çумĕнче виçĕ уйăхлăх курс уçăлнăччĕ. Курсра 18 хĕрарăм вĕренет.

Вĕренекенсем кашнех трактористкăсемпе комбайнеркăсем пулма ĕмĕтленеççĕ.

**З. МИТРОФАНОВА.**

# Вăрман хатĕрлес ĕçе вăйлатмалла

Çĕрпӳ районĕнчи вăрманпромхоз вăрман хатĕрлес плана тултарса пымасть. Вăрман хатĕрленĕ çĕрте план тăрăх 357 çын лашапа, 300 çын çуран ĕçлемелле. Хальхи вăхăтра мĕнтерĕ те 170 çын лашасăр, 25 çын лашапа ĕçлеççĕ. Вĕсем те ĕç тухăçне хăпартассишĕн тăрăшмаççĕ. Акă, «Красный плуг» колхозран сăрман хатĕрлес ĕçе кашни кун 40—45 шер çын тухать. Ыш çителĕклĕ. Анчах вĕсем йĕркеллĕн ĕçлемеççĕ. Кашни çын хăй тĕллĕн ĕçлет, бригадăсене пĕрлештермеççĕ. Вăрманпромхоз руководителĕсем ĕçе кирлĕ пек ертсе пымасçĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Вăрманпромхоз канцелярийĕнче кашни кунах кĕрсе тухмалла мар çын тăрать. Вĕсене пурне те вутă кирлĕ.

Вăрманпромхоз октябрь, ноябрь уйăхĕсенче 12.100 кубометр вăрман хатĕрлес вырăнне 3.167 кубометр çеç касса хатĕрленĕ. Çавăн пекех турттарасси те кая юлса пырать. Иртнĕ икĕ уйăх хушшинче пурĕ те 923 кубометр çеç турттарнă.

Вăрман хатĕрлес плана кашни уйăхрах тултарса пымалла. Райсовет исполкомĕн вăрманпромхоза ĕçре пулăшас пулать.

**Г. ПЕТРОВ.**

# Пособисем параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри собес отделĕ Хĕрлĕ Çара кайнă çынсен çемьисене ку таранччен 546.575 тенкĕ пособи парса пулăшнă. Хальхи вăхăтра пособи йĕркипе 1809 семье государствăран пулăшу илсе тăрать.

Красноармеец арăмĕ Е. Лобачкова юлташ пособисем парасси çинчен Указ тухнăранпа государствăран 1053 тенкĕ пособи илнĕ. Е. Тарасина, Х. Гризабовская юлташсене те ку таранччен пиншер тенкĕ ытла пособи панă.

# Чăвашсен академиллĕ театрĕ ялсенче

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăра совет партизанĕсем питех те пысăк вăй пулса тăчĕç, вĕсем тăшмана ăçта кирлĕ унта пыра-пыра çапаççĕ, унăн чĕрĕ вăйне пĕтереççĕ, техникине аркатаççĕ. Совет партизанĕсенчен нимĕç салтакĕсем çеç мар, фашистсен командованийĕ те шикленет, мĕншĕн тесен партизансем Гитлер çарĕсен тылне хавшатаççĕ, ăна шанчăксăра кăлараççĕ.

«Кĕпер» пьесăра Украина халăхĕ 1918—1919 çулсенче нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешнине кăтартса панă. Пьесăра сăнаса кăтартнă ĕçсем пултаса иртни чылай пулать ĕнтĕ, анчах çав картинăсем паянхи кун эпир лайăх ăнланакан сывăх картинăсем пулăтăраççĕ,

Колхоз клубĕнчи колхозниксем Иван учи çине пĕр куç сиктермесĕр пăхаçараççĕ. Нимĕç салтакĕсем кĕпере ăсатас шутпа шыв урлă каçнă чух партизансене пулăшакан Иван мучи ĕçсене тĕллесех персе вĕлерет, çак çăмăлтăвине курнă вăхăтра куракансем хăйсенĕллĕнех алă çупаççĕ, хăшĕсем—«молодец Иван мучи» тесе кăшкăраççĕ.

Чăвашсен тава тивĕçлĕ артисчĕ Модов юлташ «Кĕпер» пьесăри Иван мучи рольне пит те ăнăçлăн вылять. Колхозниксем ăна партизансен кĕреве лайăх кăтартса панăшăн кăмăллаççĕ тав тăваççĕ.

Тытăнăра» пьесăна та куракансем тем тери интереслисе пăхаççĕ. Акă Шагенко красноармеец нимĕçсен тытăнăнчен хăтăлать, çавăнпа пĕрлех унăн Çар боецĕсем нимĕçсен штабне çапăрса илеççĕ. Çак вăхăтра спектакль куракансем ура çине тăрса алă çупаççĕ, хăшĕ-пĕрисем «урра!» кăшкăраççĕ. Пьеса интересленчĕç Вутланти «Большевик» колхоз членĕсем спектакльне Спектакль хыççăн колхоз председателĕ артистсене колхозниксен ячĕпе саламласа тав турĕ.

«Сыран хĕрринчи пулăçă» пьесăна та аван выляса кăтартрĕç. Артист Фадеев юлташ кулак рольне ăнăçлă кăларать. Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артистки Ырзем, ытти пьесăсенчи пекех, ку пьесăра та пулăçă хĕрĕн рольне ăста вылять.

Чăвашсен академиллĕ театрĕн пĕрремĕш бригади Элĕк районĕнче 10 кун пулчĕ. Çак хушăра артистсем районăн центрĕнчи культура çуртĕнче, пенькозаводра тата 8 колхозра спектакльсем лартса пачĕç. Малтанах калас пулать, артистсем хăйсене шанса панă ĕçе тĕплĕн тата пĕлсе туса пыраççĕ. Пур çĕрте те тенĕ пекех кураканскем Молодов, Ырзем тата Илларионов юлташсем выляса панине кăмăллаççĕ.

Хальхи отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра ĕçсыннисене, уйрăмах колхозниксене, вăрçă темипе çырнă спектакльсем лартса пани питех те вырăнлă ĕç пулса тăрать. Чăвашсен академиллĕ театрĕ хăйĕн творчествăллă коллективĕпе колхозăн ялсенче политикăллă тата пропагандăллă пысăк мероприяти туса ирттерет теме юрать.

Граждан вăрçи вăхăтĕнчи партизансен каюллă ĕçĕсене сцена çинче кăтартни хальхи вăрçă вăхăтĕнче совет çыннисен патриотла туйăмĕсене çĕклентерет, совет патриочĕсене тăван çĕршывăн çапăçăва тухма чĕнет. Çавнашкалах нимĕç захватчикĕсене курайманнине, вĕсене юнпала та хĕçпăшалпа тавăрас туйăма вăйлатать. Çапла вара фашизма хирĕçле пьесăсем лартса паракан ЧГАТ бригади пысăк та ответлă задачăна пурнăçлать,

**С. САПЕРКИН.**

# Красноармеецсен çемьисене государство пулăшать

ОКТЯБРЬСКОЕ. Фронтра фашистла захватчиксене хирĕç кĕрешекен красноармеецсен çемьисене государство укçа-тенкĕ парса пулăшать.

Чăваш Туçари ВКП(б) Чăваш Обкомĕ çумĕнче тăракан колхозри комсомолец Г. Лаврентьев иртнĕ çулта Хĕрлĕ Çара тухса кайрĕ. Халĕ вăл фашистла оккупантсене хирĕç паттăрлăн çапăçать. Унăн ăмăшĕ, 60 çултан иртнĕскер, государствăран уйăхсерен 50-шар тенкĕ укçа илсе тăрать. Çавăн пекех Е. Лаврентьева, Васильева юлташсем те уйăхсеренех 50-шар тенкĕ пособи илсе тăраççĕ.

Ильменкассинчи «Молния» колхозри колхозник Данил Еремеевăн ывăлĕ Егор Данилов вăрçă тухсанах нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçма кайрĕ. Данил Еремеев кашни уйăхрах 50-шар тенкĕ пособи илсе тăрать.

Ачăсĕртри тулăмар вăтам шкултă учитель пулса ĕçленĕ В. Григорьев çемьинче ĕçе хутшăнайманнисем виçĕçĕн. Григорьев фронта кайсан, унăн çемьине уйăхсерен 150-шар тенкĕ пособи парса тăмалла тунă.

«Большевик» колхозри колхозник Л. Игнатьев Хĕрлĕ Çара тухса кайсан, унăн 55 çултан иртнĕ ăмăшĕ Анисим Пахомова киле пĕчченех тăрса юлнă. Пах

## Рейтер агентстви — Браухича вырăнтан кăларни çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ çапла кăтартса парать: Браухича вырăнтан кăларни тата Гитлер хăйне хăй Германи çарĕн главнокомандующине лартни пысăк событи пулса тăрать. Çакăн пек шикленсе ӳкнипе тата тарăхнипе тунă утăм, пĕрремĕшĕнчен, Хĕвелтухăç фронтĕнче Германи çарне Хĕрлĕ Çар аркатма тытăннине Гитлер чарса лартма хăтланнине пĕлтерет, иккĕмĕшĕнчен, çакă вăл нацистсен пуçлăхĕсем хальхи верховнăй командованипе хыттăнах килĕшменнине пĕлтерет. Браухич тата Кейтель генералсемпе Гитлер кăмăллă мар пулни çинчен калакан хыпарсем çӳрени тата Гитлер çав решение йышăнни, паллах, çакна кăтартса парать: нацистсен пуçлăхĕсемпе нимĕç çарĕн руководителĕсем хушшинче пысăк хирĕçӳсемех тухса тăнă. Гитлер çавăн пек решени йышăнни лару-тăрăва улăштарма пултараймасть, мĕншĕн тесен Гитлер Мускав çине татăклă наступлени тăвас ĕçе, кайран путланса ларнăскере, унченех пĕтĕмĕшпех хăй çине илнĕ пулнă. Генералсем Гитлерăн приказĕсем тăрăх ĕçлесе пынă. Халĕ ĕнтĕ Гитлер хăйĕн планĕсем путланса ларнишĕн генералсене айăплама пăхать. Çакă вăл татах Германире питех те шикленсе ӳкнине кăтартса парать. Çавăн пек шикленсе ӳкни Гитлерăн юлашки сăмахĕнче те уççăнах палăрса тăрать. Гитлер çав сăмахра Германи халăхне войскăсем валли ăшă тумтирсем пама чĕнĕ пулнă. Гитлерăн сăмахĕ халăха татах та ытларах шиклентерсе ӳкернĕ.

## Черчилльпе Бивербрук Америкăна кайнă

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи премьер-министрĕ Черчилль тата Англин çар снабжени министрĕ лорд Бивербрук Америкăна тухса кайнă. Вĕсемпе пĕрле тинĕс-çар штабĕн начальникĕ адмирал Танер, сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ авиаци маршалĕ Торпер тата ытти паллă çынсем пынă.

Черчилль Вашингтона самолетпа пырса çитнĕ, ăна аэродром çинче Рузвельт кĕтсе илнĕ. Черчилль Вашингтона çитсенех президентпа канашлама пуçланă.

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Канадăн премьер-министрĕ Макензи Кинг Рузвельтпа Черчиллĕн канашлăвне хутшăнма Вашингтона тухса кайать. Кинг çапла пĕлтернĕ: Черчилль Вашингтона пырса çитиччен вăл хăй Рузвельтпа та, çавăн пекех Черчилльпе те çыхăну тытса тăнă,—тенĕ. Рейтер агентствин корреспонденчĕ калаçнă чухне Кинг çапла каланă: Черчилль хăй Лондона каялла тавăрăниччен Оттавăна пырса курассине шанатăп, тенĕ.

### Вăтаçĕр тинĕсри сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, юлашки 24 сехет хушшинче Мальта утравĕ тĕлĕнче Англи истребителĕсем противникăн пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă, тепĕр икĕ самолетне сиен кӳнĕ. Çав вăхăт хушшинчех Мальта утравĕ çинче сывлăш тревоги пулни çинчен 4 хутчен пĕлтернĕ. Противник самолетсем çинчен пăрахса хăварнă бомбăсем пысăк сиенсемех туман. Жертвăсем пур.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç енĕ). Совет летчикĕсемпе Англи летчикĕсем пĕрлешсе гитлерла захватчиксене хаярăн пыра-пыра çапаççĕ.

**УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ:** Англи летчикĕсем аэродром çинче.

**ТАСС фотохроники.**

## Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: декабрĕн 22-мĕшĕнче çĕрле Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕ Германин Вильгельмсхафенри тинĕс бази çине вĕçсе пырса тапăннă. Çак операцирен пур самолетсем те каялла тавăрăннă. Çыран хĕрринчи авиацин пĕр самолечĕ тата декабрĕн 22-мĕшĕнче патрульре вĕçсе çӳренĕ тепĕр самолет хăйсен базине каялла тавăрăнман.

## Албанире итальянецсене хирĕç тăрасси ӳссе пырать

СТАМБУЛ, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Албанире Итали оккупанчĕсене хирĕç тăрасси вăйлăлансах пырать. Кунта паллă пулса тăракан сведенисем тăрăх, Албанири пуканелле правительство, итальянецсене хирĕçле выступленисене сирсе ярас шутпа, ноябрĕн 28-мĕшĕнче Тиранăра Албанин никама пăхăнманлăхĕн уявне ирттерме йышăннă. Çак демонстрацие, хăратса та улталаса, пуринчен ытларах шкул ачисене илсе тухнă. Пĕр хĕрачана демонстраци умĕнче фашистсен ялавне йăтса пыма хушнă.

Демонстраци урам тăрăх пынă чухне хĕрача фашистсен ялавне пăрахнă та, Албанин национальнăй ялавне туртса кăларса: «Сывă пултăр ирĕклĕ Албани!» тесе кăшкăрса янă. Вара халăх пăлханса кайнă, çаканпа усă курса, хĕрача халăх хушшине кĕрсе çухалнă та полицин ăна тупма май килмен. Халăх хушшинчен: «Сывă пултăр ирĕклĕ Албания! Сутăнчăксем тĕп пулчăр!» тесе кăшкăрни илтĕннĕ. Хулари халăх демонстраци тăваннисемпе пĕрлешнĕ те, вара колоннăсем национальнăй гимн юрласа урамсем тăрăх кайнă. Площадьре Итали полицийĕ демонстрантсен çулне пӳлсе хума пикенсе пăхнă. Демонстрантсемпе полици хушшинче юнлă çапăçу пуçланса кайнă; çак çапăçу вăхăтĕнче Итали полицин начальникне, пĕр полици офицерне тата икĕ полицейские вĕлернĕ. Çавнашкалах тата виçĕ демонстранта вĕлернĕ. Полицие пулăшма çитнĕ утлă полици вара демонстрантсене сапаласа янă, çаканта демонстрацие хутшăннă çĕршер çынна тытса арестленĕ.

Албанири партизансен паллă руководителĕсенчен пĕри Итали власĕсем патне çыру янă. Çак çырура вăл: паянтан пуçласа итальянецсем вĕлернĕ кашни албанецшăн Италин салтакĕсемпе офицерĕсене 10-шар çынна вĕлерме тытăнатпăр, тесе асăрхаттарнă. Вăлах Албани халăхне кашни ялтах кирлĕ вăхăтра партизансем çумне пĕрлешме е вĕсене пулăшма пултаракан çынсене хатĕрлеме чĕнсе каланă. Çапла чĕнсе каланине халăх кăмăлласах йышăннă.

Нумаях та пулмасть Албанири пуканелле правительство 18 çултан пуçласа 55 çул таранченхи çар службине тивĕçлĕ пур çынсене те салтака илесси çинчен приказ кăларнă. Итальянецсем Албанире пухнă çара Ливие ямă ĕмĕтленеççĕ, тесе шутлаççĕ. Анчах та призывной пунктсене никам та пыман. Алла хĕпăшал тытса çапăçме пултаракан албанецсенчен нумайăшĕсем тусем хушшине кайса партизансемпе пĕрлешеççĕ.

## Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Коулунран çурçĕр еннерехри района кĕрешекен Китай войскисем кăнтăр еннелле малалла куçса пыраççĕ. Китай войскисен малти чăçĕсем Тамшуй (Гонконгран 64 километрта) тата Шуючунь (Гонконгран 45 километрта) хулисем патне çитнĕ.. Партизансен отрячĕсем японецсен тылĕнче активлăн кĕрешеççĕ. Çавăн пекех партизансем Коулун çурутравĕн территорийĕ çине те кĕрсе кайнă, унта вĕсем Японин чăçĕсене атакăлаççĕ. Гонконг утравĕнчен 20 километр çурçĕр еннерех те партизансем активлăн кĕрешнине палăртаççĕ.

(ТАСС, декабрĕн 23-мĕш.).

## Швеци ригсдагĕнче

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Швеци ригсдагĕн икĕ палати те Швеци çарĕнче çар службин срокне пур тĕрлĕ войскăсенчи салтаксемшĕн те 450 куна çити тăсасси çинчен калакан çĕнĕ закона йышăннă. Пренире сăмах тухса каланă çар министрĕ Шенк çапла çирĕплетсе пĕлтернĕ: çар службинче тăмалли срока ӳстерни, хальхи вăхăтри тĕнчери кризиса пула, Швеци оборонине урăхлатса йĕркелес тата тĕреклетес тĕлĕшпе Швеци правительстви палăртакан планăн никĕсĕ пулса тăрать тенĕ.

## США çар министерствин заявленийĕ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви хăйĕн заявление пичетлесе кăларнă. Çав заявление çакна кăтартса панă: тĕнĕл держависем, Америка вăрçа кĕрсе кайсан, хăй енчен союзниксене кивçен е арендăна хĕпăшал парса тăрасси пĕтсе ларать, тесе шухăшланă. Тĕнĕл держависен çак шанăçне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министрĕ пĕтерсе тăкать. Союзниксене пулăшасси, тĕнĕл держависем кĕтнĕ пек мар, пачах та урăхла пулать, тенĕ çар министрĕ. Çар министерстви малалла çапла кăтартса парать: Япония тата тĕнĕл держависем Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç вăрçă пуçлани çар промышленноçĕн продукцине татах та ытларах ӳстерме хистерĕ. Паллах, çакă вăл пĕтĕмĕшлĕ противника хирĕç кĕрешекен çĕршывсене валли материалсем ярса пырассине пĕчĕклетме мар, ӳстерме кăна пултарать.

## Стимсон заявленийĕ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Çарĕç министрĕ Стимсон çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарне пысăклатма йышăннă плансем пĕтĕмпех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пуласçĕ. Ситес сывăх вăхăтсенчех çара пĕтĕмпех обязательнăй çар повинноçĕ шучĕпе тултарса пымалла пулать. Çара доброволецсен чен пухас системăна пĕтĕмпех пĕтерсе хураççĕ. Запасра тăракан пур офицерсене те обязательнăй йĕркепе медицина енчен пăхса тĕрĕслесси çинчен распоряжени параççĕ. Çар ĕçне валли хушса 10 миллиард доллар укçа-тенкĕ парасси çинчен йышăннă законопроекта президент Рузвельт алă пусса çирĕплетнĕ.

## Лăпкă океанри вăрçă

### АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Паян ирхине Манилăра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Лусон утравĕн çурçĕр пайĕнче Япония антарнă десант чăçĕсене хирĕç çапăçасси çаплах чарăнман. Типçĕр çинчи войскăсен атакисене авиаци пулăшса тăрать. Юлашки вăхăтра илнĕ хыпарсем тăрăх, Америка çарĕсем Манилăран 110 милĕре çурçĕр енче тăракан Дамартис сывăхĕнчи позицие йышăнса тăраççĕ. Ĕнер Япони авиацийĕ активлăн çапăçнă, анмай пунктсем çине тапăнса бомбăсем пăрахнă. Америка самолечĕсем Японин самолечĕсене хирĕç çапăçнă.

Филиппин тата Америка летчикĕсем юлашки кунсенче Лусон утравĕн кăнтăр пайĕнче пулнă çапăçусенче японецсенне 8 самолет персе антарнă.

Давао районĕнчи (Миндинао утравĕ) лару-тăру паллă мар.

### АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕ кăларнă коммюнике Малайăн çурçĕр пайĕнчи фронтра нимĕнле улшăну та пулманни çинчен пĕлтерет.

Ĕнер каçхине Сингапурта сывлăшран тапăнинне систерекен кĕске тревога туса ирттернĕ. Бомбăсем пăрахни пулман. Ĕнер ирхине японецсен истребительнăй авиацийĕ Куала-Лумпурти аэродром çине тапăнма хăтланса пăхнă.

Англин Гонконгри командованийĕ кăларнă коммюнике кунти çапăçусем пĕтĕм оборона линийĕ тăршшĕпех пынă çинчен пĕлтерет. Утравăн кăнтăр пайĕнчи Англи войскисем ĕнерхи çапăçура пысăках мар çитĕнӳсем тунă. Декабрĕн 22-мĕшĕнче, каç умĕн 6 сехет тĕлнелле, Япони войскисем утравăн хĕвелтухăç пайне йышăнса илнĕ. Утравăн хĕвеланăç пайĕнче тăракан Англи гарнизонĕн тĕп вăйĕсем хĕвеланăç еннелле пыма тапăнакан Япони çарĕсене чарса тăраççĕ.

### ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, декабрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Япони войскисем Миндинао утравне йышăнса илни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтереççĕ. Типçĕр çинчи çар чăçĕсем хăйсен операцийĕсене тинĕс флочĕпе тата авиацине таччăн сыхăнса туса пынă.

## Филиппинсенчи вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Филиппинсен утравĕсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Лингайен заливне десант антарма пынă Япони эсминецĕсемпе транспорчĕсенчен чылайăшĕсем, Америкăн пысăк орудийĕсем персе тăнипе, хăйсен ĕçĕсене тăваймасăрах каялла çаварăнса кайнă. Тупăсенчен пенипе японецсен темиçе çар карапĕ тата транспорт парохочĕсем тинĕсе путнă пулĕ тесе шутлаççĕ. Юлашки хыпарсем Америкăпа Филиппинсен войскисем хăйсен позицийĕсене парăнмасăр тытса тăни çинчен пĕлтереççĕ. Сыран тăрăх, тăшман десант антарма ĕлкĕрнĕ пунктсенче, юн юхакан вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Кунти çырана тухма тăрăшакан Япони войскисен йышĕ 30 пин-рен пуçласа 100 пин çын таран шутланать.

Ку çар йышĕнчен хăшпĕр чăçĕсем йывăр хĕпăшалсемпе пĕрлех типĕ çĕре тухма пултарнă, вĕсем танксем те илсе пынă. Америка çарĕн командованийĕ пĕлтерĕ тăрăх, Филиппинсен утравĕсен хăшпĕр районĕсенче ку вăхăтра танксемпе вăрçасси те пуçланса кайнă ĕнтĕ. Чăн та, çав танксене икĕ енĕ те çапăçăва пит йышлăнах кĕртме ĕлкĕрмен-ха.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 21-мĕш (ТАСС). Америка çарĕн командованийĕ Филиппинсен утравĕсем çинчи вăрçă ĕçĕсем иккĕмĕш эрнере мĕнле пыни çинчен пĕлтерекен коммюникене пичетлесе кăларнă. Коммюнике вăрçă ĕçĕсем çурçĕр фронтĕнче те кăнтăр фронтĕнче те вăйланса пынине кăтартса парать. Çĕмĕрсе кĕнĕ тăшмана Америкăн типçĕр çинчи çарĕсемпе сывлăшри чăçĕсем хытăрах та хытăрах пыра-пыра çапма пуçласçĕ. Виган тата Легаспи районĕсенче тăшман патрулĕсене хăваласа каялла тартнă. Иртнĕ эрне хушшинче японецсем 12 хутчен пысăк рейд туса ирттернĕ. Çавах та çак рейдсем кӳнĕ сиенсемпе çухатусем пысăках мар.

Америкăн сывлăшри вăйĕсем тăшманăн Легаспи районĕнчи чăçĕсем çине пырса тапăннă. Кунта бомбăсем пăрахнă, японецсен икĕ транспортне хытă сиенленĕ. Çак районрах тăшманăн 4 самолетне персе антарнă. Виган районĕнче Америка летчикĕсем Японин самолечĕсене хирĕç çапăçнă. Çапăçу вăхăтĕнче тăшманăн 1 самолетне персе антарнă тата 25 самолетне çĕр çинче çĕмĕрсе тăкнă. Горючи усракан резервуара вут хыптарса янă. Миндинао утравĕ çинчи Давао районне тăшман пысăк çар чăçĕсем антарма ĕлкĕрнĕ. Хальхи вăхăтра унта вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

## Ютçĕршыв хроники

▲ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй департаменчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç вăрçакан пур çĕршывсенче те Америкăн интересĕсене Швейцари хӳтĕлесе пырать.

▲ Турцири пичет ĕçĕнчи работниксем, Греци журналисчĕсем янă çыру çине ответ парса, выçăпа аптракан грек халăхне валли 60.00 пăт продовольстви таварĕсем яма йышăннă.

▲ «Трибюн де Женев» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ Берлинра декабрĕн 11-мĕшĕнче, Германия Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç вăрçă пуçласа яни çинчен Гитлер юлашки хут тухса каланă кун, мĕнле лару-тăру пулни çинчен çырса пĕлтерет.

Берлин паян сивĕ чирпе чирлекен çын пек пурăнать, — тесе çырать корреспондент. — Берлинри халăх юлашки çулсем хушшинче хăрушă сехетсене нумай чăтса ирттернĕ пулин те, халĕ пăшăрханать». Берлинри халăх Гитлерăн сăмахĕсемпе питех интересленмест, — тесе палăртать корреспондент. Нумайĕшĕ çак çĕнĕ вăрçа пуçластăн мар пулнă. Германири халăхăн ытларах пайне вăрçă çавтери ывăнтарса çитернĕ, пурте пĕртен пĕр тапхăра — мир пулас вăхăта кĕтеççĕ.

## ЙĔЛТĔРПЕ ÇӲРЕМЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ШАХАСАН. Шуркассинчи, Шăхасанти вăтам шкулсенче йĕлтĕрпе çӳреме, штыкпа тăрса çапăçма, гранатăсемпе çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсене ывăтма, пăшал пеме вĕренмелли кружоксем аван ĕçлеççĕ. Шăхасанти вăтам шкулта икĕ хутчен йĕлтĕрлĕ походсем туса ирттернĕ. Çав походсенче 70 вĕренекен ытла хутшăннă. Каникул вăхăтĕнче 30 километрлă йĕлтĕрлĕ поход туса, вĕренекенсем Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоза экскурсие кайма хатĕрленеççĕ.

Çавăн пекех Шуркассинчи вăтам шкулта та йĕлтĕрпе çӳреме, штыкпа тăрса çапăçма, гранатăсем ывăтма вĕренес тĕлĕшпе 7 хутчен занятисем туса ирттернĕ. Унта 8-мĕшпе 9-мĕш классенче вĕренекенсене пурне те явăçтарнă. Çак кунсенче вĕренекенсем 10 километрлă йĕлтĕрлĕ поход туса ирттернĕ. Унта 40 ача ытла хутшăннă. Çавăн пекех 2 километр хушши противогазпа тата йĕлтĕрпе похода кайнă.

Походра Н. Матвеев, С. Сасонов, И. Кузнецов, Н. Игнатьев вĕренекенсем хăйсен пултарулăхĕсене уйрăмах кăтартрĕç. Вĕсем йĕлтĕрпе хăварт тата пысăк ăсталăхпа хайса малти вырăна тухрĕç. Çавнашкалах вĕсем штыкпа тăрса çапăçма, гранатăсем ывăтма вĕренес тĕлĕшпе те аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Çарпа физкультура ĕçне вĕрентме шкулăн çар хатĕрĕсем çителĕклĕ. Шкулта 300 мăшăр ытла йĕлтăр, 29 противогаз, 46 учебнăй граната тата вĕренмелли винтовкăсемпе кĕреçесем те çителĕклĕ таран пур.

Вĕренекенсене çарпа физкультура ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе шкулти военрук М. Григорьев тата пионер вожатăйĕ Афанасьев юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕренекенсемпе каникул вăхăтĕнче йĕлтĕрлĕ походсем туса ирттерме палăртнă.

Çавăн пекех, ку ĕç Аваспӳрт Клубĕнчи, Ямашпи вăтам шкулсенче те ăнăçлăн пулса пырать.

**В. ЯКОВЛЕВ.**

## Заем укçине тӳлесе татнă

ЕТĔРНЕ. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн районри колхозниксем заем укçине васкасах тӳлеме тытăнчĕç. Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхоз, Атликассинчи «Борец» колхоз членĕсем юлашки кунсенче заем укçине виçĕ пин тенке яхăн пухрĕç. Мардарейкин, Зайцев тата ытти колхозниксем те заем укçине тӳлесе татса, заем облигацийĕсене алла илнĕ те ĕнтĕ. Заем уполномоченнийĕсем Анисовпа Моисеев юлташсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе колхозниксем хушшинче лайăх йĕркеленĕ.

Заем укçине пухас ĕç Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхозра, Йĕкĕтри «Хĕрлĕ Октябрь» колхозра та ăнăçлă пулса пырать.

**ТИМОНИН.**

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăвашсен Государство Издательствинче ача-пăча литературин секторĕ кĕçĕн çулхи ачасем валли çак кĕнекесене кăларчĕ:

**Ванда Василевская — Ачасем. Тиражĕ 2500 экз., хакĕ 40 пус.**

Германин урса кайнă фашисчĕсем татăклăнах çĕмĕрсе тăкассипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем паттăрăн çапăçаççĕ. Çак çапăçура вĕсен мĕнпур совет граждăнĕсемпе ачасем те пысăк пулăшу парса пыраççĕ. Тăшмана çĕнтерес тесе вĕсем хăйсен пур нăйне шеллемесĕр геройла ĕçсем тăваççĕ. Асăннă пĕчĕк кĕнекере автор пĕвуникĕ çулти ача граната пăрахса кайнă нимĕç çарĕсен штабĕнчи ултă офицера вĕлерни çинчен тата вĕсемпе пĕрлехăй те геройла пĕтни çинчен çырать. Çакăн пекех тата ку кĕнекере партизансен отрядĕнче тăракан вунпилĕк çулти ачасен паттăр ĕçĕсене те кăтартса пана.

**«Коллектив—чи хакли». Тиражĕ 300 экз., 12 стр., хакĕ 50 пус.**

Çак пĕчĕк кĕнекене карел халăхĕн никăсланпне кĕртнĕ. Вăл халлапсенчĕлĕкхи вăхăтра питех те чухăн пурăннă карел халăхĕ Совет власĕ вăхăтĕнче Сталин юлташ ертсе пынипе телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туни çинчен каласа панă.

**Юрий Герман.—Феликс Дзержинский. Тиражĕ 3000 экз., 68 стр., хакĕ 1 т 50 пус.**

Феликс Эдмундович Дзержинскине юлташĕсем «хурçа пек çирĕп Феликс» тенĕ. Ăна нихăм та çĕнтерме пултараймăн, никам та иккĕлентерейменçавăпла та ăна хурçа пек çирĕп теснĕ Дзержинский хăйĕн пурнăçне пĕтĕм пех рабочи класс ĕçĕсемшĕн панă. Паттăша тарçисем ăна пĕрре кăна мар арестлесе тĕрмене хупса лартнă. Пуçăвал вунпĕр çул хушшипи тĕрмесенче ларнă. Анчах тĕрмесенче асапланни те, йывăр пурнăç та унăн большевикла çирĕплĕхне хуçаймарĕ. Çак кĕнекене вулакан Дзержинский резолюцийĕсем ĕçĕсен хăшпĕр тапхăрĕсенче паллашать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

## *Браухича отставкăна кăларни*

Германин çĕр çинчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующине, генерал-фельдмаршала Браухича вырăнтан кăларнă. Браухич вырăнне Гитлер—Гитлера лартнă. Гитлерăн вăрçăри пултарулăхĕсем çинчен нацистсен тепĕр генерал-фельдмаршалĕ, чылаях паллă Лист çапла каланă: Адольф Гитлер офицерсен хĕçĕн чиннне те пулин илес пулсан, çав положенипе эпĕ нихăçан та килĕшес çук, тенĕ. «Фюрер» тахçан ĕлĕк Лист полкĕнче ефрейтор пулса пурăннă.

Вальтер фон Браухич—Германи çарĕн ватă офицерĕ. Кавалери генералĕн ывăлĕ Браухич 1881 çулта Берлинра çуралнă, кадетсен корпусĕнче вĕреннĕ, унтан 1900 çулта вĕренсе тухсан, ăна гренадерсен гвардейски полкĕнче лейтенант чинне парса ĕçе лартнă.

1913 çулта вăл, капитан чинне илсе, генеральнăй штаба ĕçлеме куçнă.

Фон Браухич—пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăн участникĕ. 1914—1918 çулсенчи вăрçă хыççăн Браухич рейхсверта ĕçленĕ. Вăл çар министерствинче те ĕçлет.

1931 çулта Браухич генерал-майор пулнă. 1932 çулта ăна артиллери инспекторĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Браухич уйрăмăнах Гитлер вăхăтĕнче ӳссе каять. 1935 çулта вăл артиллери генералĕ пулса тăрать, 1938 çулта вара вăл Гитлера килĕшмен генерал-полковник Фритч вырăнĕнче гитлерла Германăн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Главнокомандующине ларнипе пĕрлех вăл генерал-полковник чинне илет. 1938 çулти март уйăхĕнче вăл министр званине те илет. Браухич—государствăн вăрттăн совечĕн членĕ.

Нимĕçсен фашистла пичечĕ хăйĕн генералне мухтаса юрлама тытăнать. Австрие тытса илес, Судет облаçне, Мемеле, пĕтĕм Чехословакине тытса илес операцисене Браухич ертсе пырать. Вăл—гитлерла çарсене туса хураканĕ, çав çарсен тĕп тактикĕ тата стратегĕ.

1937 çулта Браухич унчухне ăна туса хунă армейски группăн, Германи çарĕн пĕтĕм мотомеханизированнăй чăçĕсене пĕрлештерсе тăраканскерĕн, командирĕ пулнă. Çиçĕм пек хăварт вăрçă тăвас ĕçре çак группăна уйрăмах паллă вырăн панă.

Браухич Польшăри кампание ертсе пырать. «Уйрăмах паллă ĕçсем» тунăшăн, Польшăна хирĕç çиçĕм пек хăварт вăрçă туса ирттернĕшĕн фюрер ăна рыцарьсен тимĕр хĕресне парать. Чехословакире «ăнăçлă операцисем» тунăшăн Браухич нацистла партин ылтăн значокне илет.

Браухич Франçие хирĕç кĕрешмелли кампанин планне туса хатĕрлет. Фашистсен пичечĕ çав плана Гитлер тусă тесе пĕлтерет пулин те, çар ĕçĕсем тĕлĕнчи тĕп советникăн тата тĕп экспертăн Браухичăн ĕçне пĕрмаях паллă тăвать. Браухич хăех Франçие хирĕç пынă кампанине ертсе пырать. Гитлер ăна наградăсем парса тултарать. Браухич генерал-фельдмаршал пулса тăрать.

Çаканпа вара карьера чарăнать. Браухича вырăнтан кăларнă. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă чи хĕрсе пынă вăхăтра главнокомандующине вырăнтан кăларнă. Ватă генерал Гитлерăн авантюришĕн айăпланать. Паллах, хăйĕн тусĕсен пĕчĕк ушкăнĕнче вăл: «Эпĕ хĕвелтухăçне поход тăвассине хирĕç пулнă», тесе калама пултарать. Вăл, тен, Европăри вăрçă пуçланас умĕн хăй Гитлера панă меморандума аса илĕ. Çав меморандум çинчен, Хĕвеланăçĕнчи çăмăл ăнăçусемпе ӳсĕрĕлсе кайса, вăл маннă пулмалла. Ютçĕршывсенчи пичет кăтартса панă тăрăх, çав меморандумра вăл çапла çырнă: «Сирĕн тĕллев Англие çĕнтересси пулса тăрать. Çав тĕллеве Хĕвелтухăçне поход тунипе нимĕнле те пурнăçа кĕртме çук, унта сире поражени кĕтет, унта сире хирĕç вăхăт, тавралăх тата Российăн çынсемпе материалсем тĕлĕшĕнчи вĕçĕ-хĕррисĕр резервĕсем тăраççĕ».

Гитлерăн юнлă авантюришĕн Браухич хăйĕн карьерине чарса лартрĕ, нимĕç халăхĕ вара—миллионшар пурнăçсемпе тӳлет.

Браухича отставкăна кăларни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакă вăл—Германи командованийĕнче пысăк кризис пуррине кăтартса параканни; çакă вăл—нацистсен çӳлти ушкăнĕсенче ытларах та ытларах вăйланса пыракан харкашусем çине ответ пани; çакă вăл—нацистсемпе генералитет хушшинчи хирĕçӳсене кăтартса параканни; çакă вăл—Германин шалти политикăлă пурнăçĕ ытларах та ытларах йывăрланса пынине кăтартса параканни пулса тăрать.

Браухич айăпсăр айăпа кĕнĕ мĕскĕн пулса тăчĕ. Унăн фюрер тунă пĕтĕм ăнăçсăрлăхсемшĕн тӳсес пулать, «çĕнтерме çук» генералсен авторитетне пĕтерсе, Гитлерăн авторитетне сыхласа хăварас пулать.

Анчах Браухича отставкăна кăларнин тĕп пĕлтерĕшĕ вăл—хĕвелтухăçĕнчи поход арканса кайнине йышăннинче, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçăра ăнăçсăрлăхсемпе пулнине йышăннинче. Çак факта вара, ултавлă фюрер темĕнле пăркаланса темĕнле маневрсем тусан та, пытарса хăвараймĕ. Браухича отставкăна кăларнипе сыхсиен Гитлер хăй чакнине витсе хумма хăтланать. Анчах кунта та ăнăçсăрлăхсем тӳсет, мĕншĕн тесен унăн аргументацийĕ вăл поражени тӳснине татах та ӳçăнрах палăртать. Вăл темиçе хут та «пĕтерсе тăкнă» совет çарĕ хăрушă противник пулса тăрать. «Маневрлă вăрçăран позициллĕ вăрçа кусрăмăр»—фашистсен тĕлĕпе чăхса пынине çакăн пек калаççĕ. Гитлер çарĕсем чакса пыраççĕ кăна мар, часчасах ним йĕркесĕр тараççĕ. Гитлер çакна кĕтмен çĕртен хĕл килсе çитнипе ăнлантарса парать. Мĕнле-ха, чăнах та, тĕлĕнмелле çул килчĕ: кĕркунне хыççăн хĕл пулчĕ, çулла мар!

Çаксем пурте кулăшла илтĕнеççĕ, унтан та ытларах—ĕненмелле мар янăраççĕ. Гитлер начар вăйăра лайăххăн курăнма тăрăшать: ахалех! Вăйăн те начар, сăнĕ-пичĕ те начар, чи кирли вара—вăрçăра ĕçсем начар.

(«Правда», декабрĕн 24-мĕш.).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабочăкорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7446

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф б. 58 84 п. л.